Библиотека м. Горького

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш облаçĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

№ 2 (9681) | 1956 çул, январь 3, ытларикун | 38-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

Улттăмĕш пилĕкçуллăхăн пĕрремĕш çулĕ

Историе кĕрсе юлнă 1955 çула совет çыннисем ырă сăмахпа асăнса ăсатрĕç. Килсе çитнĕ 1956 çула вĕсем шанчăклăн та хаваслăн кĕтсе илчĕç.

Иртнĕ çул пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхăн юлашки çулĕ пулчĕ. Пирĕн социализмла промышленность пилĕк çуллăх планăн заданийĕсене срокчен — тăватă çул та тăватă уйăх хушшинче пурнăçларĕ. Йывăр индустри — металлурги, çĕр кăмрăк тата нефть промышленноçĕ, машиностроени, энергетика пуринчен те хăвăртрах аталанса пычĕç. 1955 çулта ССР Союзĕн пĕтĕм промышленноçĕ туса кăларнă продукци 1913 çулхи шайран 27 хут иртсе кайнă, çав шутра производство хатĕрĕсем туса кăларасси 60 хут, электроэнерги туса кăларасси — 86 хут, машиностроени продукцийĕ туса кăларасси — 160 хут ытла ÿснĕ.

КПСС Центральнăй Комитечĕн иртнĕ çулхи июль уйăхĕнче пулса иртнĕ Пленумĕ наукăн, техникăн тата малта пыракан опытăн чи çĕнĕ çитĕнĕвĕсене çине тăрса тата план йĕркипе пурнăçласа пынă никĕс çинче промышленноçа малалла хăватлăн аталантарса пымалли конкретлă çул-йĕрсене палăртса пачĕ. Июльти Пленум решенийĕсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе сахал мар ĕç тунă ĕнтĕ, анчах та чи кирлине туман-ха. 1956 çул — улттăмĕш пилĕкçуллăхăн пĕрремĕш çулĕ промышленность работникĕсем валли техникăлла прогресшăн, ĕç тухăçлăхне ÿстерессишĕн, промышленность производствин мĕнпур отраслĕсене çĕнĕрен хăватлăн çĕклентерессишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешмелли çулталăк пулать.

Иртнĕ çул ял хуçалăхĕшĕн те паллă çул пулчĕ. КПСС Центральнăй Комитечĕн январьти Пленумĕ йышăннă решенисем ял хуçалăх работникĕсене кирлĕ ĕçсен уççăн палăрса тăракан программине туса пачĕç. Çак ĕçсем пирĕн çĕршыври халăх валли питĕ нумай апат-çимĕç, çăмăл промышленность валли çителĕклĕ чĕртавар туса хатĕрлеме май параççĕ. 1955 çул пире панă чи хакли вăл — малта пыракан колхозсен паха опычĕ. Вăл январьти Пленум партнă задачăсене срокчен пурнăçлама май пуррине ĕçре кăтартса пачĕ.

Промышленноçпа ял хуçалăхĕ пĕрмаях малалла çĕкленсе пыни çирĕп никĕс пулса тăрать, çак никĕс çинче пирĕн халăхăн пурнăçĕ куллен-кун лайăхланса пырать. Çавăн пек нумай тĕслĕхсенчен пĕри Мускаври строительсен çитĕнĕвĕсем çинчен ĕнер пĕлтерни пулса тăрать: 1955 çулта столицăри ĕççыннисем валли пурăнмалли çурт-йĕрсем пĕр миллион тăваткал метр ытла туса панă. Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви пирĕн çĕршывра таварсем нумайрах та нумайрах туса кăлармалла, суту-илĕве лайăхланса пымалла пултăр тесе, пурăнмалли çуртсемпе культурăпа йăла учрежденийĕсем нумайрах тăвас, ĕççыннисен пĕрмаях ÿссе пыракан материальнăй тата культурăлла ыйтăвĕсене туллинрех те туллинрех тивĕçтерес тесе, мĕн кирлине пĕтĕмпех тăваççĕ.

Совет халăхĕпе пĕрле хуçалăхна культура строительствинче пирĕн туссем — аслă Китай халăхĕ, мĕнпур халăх демократи çĕршывĕсенчи ĕççыннисем питех те пысăк çитĕнÿсем турĕç. Çак çитĕнÿсем аслă социализмла лагерĕн хăватне, вăл тачă пĕтĕçсе тăнине, çак лагерьти çĕршывсем пĕр-пĕринпе тăванла тачă çыхăнса ĕçлесе пурăннин чаплă результачĕсене кăтартса параççĕ. Эпир вилĕмсĕр Ленин кăтартса панă çулпа малалла пыратпăр, социализмăн никам çĕнтерейми ялавĕ айне тăнă çĕршывсен туслăхне пăсма, вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрма пултаракан вăй тĕнчере çук.

Пирĕн Тăван çĕршыв, социализм лагерĕнчи мĕнпур çĕршывсем, мире юрататакан мĕнпур халăхсем тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатассишĕн, аслă мир ĕçне çирĕплетессишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешни ăнăçлă пулчĕ. Çĕр чăмăрĕн мĕнпур кĕтессисенчи миллионшар çынсем халĕ çакна уççăн курса ĕненчĕç: халăхсем пĕр-пĕринпе туслăн килĕштерсе ĕçлесе пурăнасшăн, тĕрлĕ социально-политикăлла системăллă çĕршывсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнма пултараççĕ.

1955 çулта Совет Союзĕ мире хÿтĕлес тата çирĕплетес тĕлĕшпе тунă ĕçсене этемлĕх нихçан та манас çук. Кунта Совет правительствин нумай мероприятийĕсене, çав шутра Югославипе йĕркеллĕ хутшăнусем тунине, Федеральнăй Германи Республикипе дипломатилле çыхăнусем тунине, Австрипе договор тунине, Финляндипе ырă кÿршĕллĕ хутшăнусем тытассине йĕркеленине, ССР Союзĕ атомлă хĕçпăшала чарса лартасси, хĕçпăшалланма чарăнасси çинчен килĕшÿ тума тăрăшнине аса илни те çителĕклĕ пулать. Тăватă держава правительствисен Пуçлăхĕсен Женеври канашлăвĕ историлле пысăк вырăн йышăнчĕ. Çав канашлу участникĕсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлес, пĕр-пĕрне ăнланас шухăш пуррине кăтартрĕç. Ку вăл государствăсем хушшинчи хутшăнусене лайăхлатма чăн-чăн майсем туса пачĕ, çирĕп мир тумашкăн лайăх малашлăхсем уçса пачĕ. Мĕнпур халăхсем ырласа кĕтсе илнĕ çак майсемпе перспективăсене «сивĕ вăрçă» тăракансем нихçан та пытарса хураймĕç!

ССР Союзне Инди премьер-министрĕ Дж. Неру килни тата Н. А. Булганинпа Н. С. Хрущев юлташсем Индие, Бирмăна тата Афганистана кайса çÿрени иртнĕ çулхи çав тери паллă событисем пулса тăраççĕ. Çак историлле ĕçĕн итогĕсене СССР Верховнăй Совечĕ тата пирĕн çĕршыври мĕнпур ĕççыннисем, пĕр кăмăллă пулса, хĕрÿллĕн ырларĕç. Вĕсем СССР, Инди, Бирма тата Афганистан халăхĕсене пĕр-пĕринпе çывхарма пулăшрĕç кăна мар, пĕтĕм тĕнчери мире юрататакан вăйсен позицийĕсене çирĕплетрĕç, халăхсен пĕр тан правипе туслăхĕн идейисен пысăк çĕнтерĕвĕ, тĕрлĕ обществăлла системăллă государствăсем пĕр-пĕринпе мирлĕ пурăнас идейăсен пысăк çĕнтерĕвĕ пулчĕç.

1956 çула совет халăхĕ хăй умĕнче тăракан аслă задачăсене пĕтĕмпех ăнланса кĕтсе илчĕ. Çак задачăсене КПСС Центральнăй Комитечĕн январьти тата июльти Пленумĕсен решенийĕсенче, СССР Верховнăй Совечĕн çĕнĕ çул умĕн вĕçленнĕ сессийĕнче Н. А. Булганинпа Н. С. Хрущев юлташсем тухса каланă сăмахсенче тĕплĕн те уççăн каласа панă.

1956 çулта пирĕн çĕршывăн пурнăçĕнче питех те пысăк событи — Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XX-мĕш съезчĕ пулать. Съезд ячĕпе пуçланнă социализмла ăмăрту пирĕн халăх хăйĕн партийĕ тавра тачă пĕтĕçсе тăнине, ăна вĕçĕ-хĕррисĕр юратнине çав тери вăйлăн кăтартса парать, пирĕн парти рабочи класпа ĕçхрессченĕсен чăн-чăн çулпуçĕ, пĕтĕм халăхăн пурнăçри интересĕсене палăртаканĕ пулса тăнине кăтартса парать.

Партин XX-мĕш съездне тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленсе, социализмла промышленность работникĕсем çĕнĕ çулăн пирвайхи кунĕсенчех пĕр тикĕс ĕçлеме, планра кăтартнă заданисене пĕтĕмĕшпех тата иртерсе тултарма, ĕç тухăçлăхне вĕçĕмсĕр ÿстерсе пыма хатĕр тăнине кăтартса параççĕ. Колхозниксем, МТС-семпе совхозсен работникĕсем хăйсен вăй-халне хăйсемшĕн тĕп вырăн йышăнса тăракан задачăсене татса парас ĕçе хураççĕ. Вĕсем çуркуннехи уй-хир ĕçĕсене вăхăтра хатĕрленсе çитессишĕн, тракторсемпе мĕнпур ял хуçалăх машинисене хăвăртрах юсаса çитерессишĕн, выльăх-чĕрлĕхе ăнăçлă хĕл каçарассишĕн кĕрешеççĕ, агротехникăна çине тăрса вĕренеççĕ.

1956 çул — улттăмĕш пилĕкçуллăхăн пĕрремĕш çулĕ. Совет халăхĕ улттăмĕш пилĕк çуллăх плана ăнăçлă пурнăçлассишĕн хăйĕн ĕçĕпе вăй-халне шеллесе тăрас çук. Çак плана пурнăçлани вăл пирĕн промышленность, ял хуçалăхĕ малалла çĕкленнипе, халăх пурнăçĕ лайăхланнипе, пирĕн çĕршыв социализмла общество туса çитерсе социализмран майĕпен коммунизма куçса пымалли çул çинче çĕнĕ пысăк утăм тунине кăтартса парать.

1956 çул — пирĕн советлă аслă Тăван çĕршывăн тата социализмăн хăватлă лагерĕнчи мĕнпур çĕршывсен çĕнĕ чаплă çитĕнĕвĕсен çулталăкĕ пултăр! Вăл тĕнчери лару-тăрăва малалла çăмăллатмалли, мир ĕçне çирĕплетмелли, туслăха тата халăхсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлессине çирĕплетмелли çулталăк пултăр!

(«ПРАВДА» хаçатăн январĕн 2-мĕшĕнчи умстатьи).

СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Н. А. Булганин Çĕнĕ çул ячĕпе тунă заявлени

Францири Англин Пате-Маркони ятлă радиотехникăлла компанийĕ СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕнчен Н. А. Булганинран тĕнчери мĕнпур радиостанцисен тăрăх 1956 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче пама Çĕнĕ çул ячĕпе заявлени тума ыйтнă.

Аяларахра Н. А. Булганин Çĕнĕ çул ячĕпе тунă заявлени пичетленет:

«Пире итлекенсене, вĕсем ăçта пулсан та, Çĕнĕ çул ячĕпе чĕререн саламлатăп тата телей, сывлăх, пурнăçра ăнăçусем тума ырă сунатăп.

Паян миллионшар çынсенчен вĕсен чи пысăк шухăш-ĕмĕчĕ мĕнле тесе ыйтсан, вĕсем, паллах, пĕр шухăшламасăрах çапла ответлĕç: мир.

Халăхсем мирлĕн те туслăн пурăнма пултараççĕ, çавăн пек пурăнма тивĕçлĕ те. Вĕсен миршĕн тăраççĕ, мĕншĕн тесен мир кашни çынна ыранхи куншăн шанчăклă пулма май парать, хĕçпăшалланнипе пулакан пысăк та кирлĕ мар йывăрлăхран хăтарать, ăнăçлă ĕçлеме тата лайăхрах пурнăç тума май парать.

Эпир — тĕрлĕ социально-политикăлла системăллă государствăсемпе мирлĕн пурăнасшăн, мĕншĕн тесен çакă вăл мĕнпур çĕршывсенчи халăхсен чи пысăк шухăш-ĕмĕчĕсемпе килĕшсе тăрать.

Çак шухăшсемпе эпир правительствăсен Пуçлăхĕсен Женеври канашлăвне хутшăнтăмăр, вăл тĕнчере тухса тăнă ыйтусем тăрăх килĕшÿллĕ решенисем йышăнас тĕлĕшпе пĕр-пĕрне ăнланас тата килĕштерсе ĕçлес тĕлĕшпе паллă вырăн йышăнать.

Çак çул-йĕр тĕрĕс пулнине эпир хамăр нумай пулмасть Индие, Бирмăна тата Афганистана кайса çÿренĕ вăхăтра тата ытларах ĕнентĕмĕр.

Çак çĕршывсемпе, çавăн пекех тата ытти çĕршывсемпе пирĕн хушăри туслăх пурте пĕлекен пилĕк принцип çинче никĕсленсе тăрать. Вĕсем — пĕр-пĕрин территорийĕн пĕр-пĕтĕмĕшлĕхĕпе суверенитетне хисеплес, тапăнас мар, пĕр-пĕрин шалти ĕçĕсене хутшăнас мар, пĕртанлăх тата пĕр-пĕрне усă кÿрес, мирлĕн пурăнас принципсем.

Эпир çирĕп ĕненсе тăнă тăрăх, çав принципсемпе мĕнпур çĕршывсем усă курни вăл государствăсем хушшинче пĕр-пĕрне шанса тăрассине тĕреклетмелли тата тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатмалли çул çинче малалла тунă паха утăм пулĕччĕ.

Çак çул çинче сахал мар чăрмавсемпе йывăрлăхсем пуррине эпир пĕлетпĕр, анчах та эпир çакна çирĕп ĕненсе тăратпăр: мĕнпур государствăсем енчен ырă кăмăл пулсан тата мир тума тăрăшсан вĕсене сирсе яма тата тухса тăнă ыйтусем тăрăх калаçса татăлма пулать. Иртнĕ çул çавăн пек тĕслĕхсем сахал мар пачĕ. 1956 çул хăйĕн умĕнхи çулăн çитĕнĕвĕсене малалла туса пытăр тата нумайлатса пытăр тесе, çине тăрарах ĕçлер.

Çĕнĕ çул тĕнчери хутшăнусенчи йывăрлăха малалла çăмăллатмалли çул, пĕтĕм тĕнчери мире çирĕплетмелли çул пултăр тесе ырă сунар.

Югославири „Недельне информативне Новине“ хаçат директорĕ Станка Веселинова панă ыйтусем çине СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Н. А. Булганин панă ответсем

Югославири «Недельне информативне Новине» хаçат директорĕ Станка Веселинова ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Н. А. Булганин патне çыру янă. Çав çырура вăл Югослави общественноçне интереслентерекен тата тĕнчери хальхи лару-тăрăва пырса тивекен ыйтусем çине ответсем пама ыйтнă.

«Пирĕн редакци те, Югославири вулакансем те, — тенĕ С. Веселинова çырăвĕнче, — Эсир пирĕн ыйтăва тивĕçтерме хапăл тунипе пысăка хурса хакланă пулĕччĕç. Эпир Сирĕн заявлени пирĕн хаçатăн Çĕнĕ çул ячĕпе тухакан номерĕнче, Югослави дипломати енĕпе лайăх çыхăнусем тытакан ытти çĕршывсен премьер-министрĕсен заявленийĕсемпе пĕрле, пичетлесе кăларма шутлатпăр».

Аяларахра Югослави хаçачĕн директорĕ С. Веселинова панă ыйтусем çине Н. А. Булганин панă ответсем пичетленеççĕ.

Ыйту: Эсир иртнĕ çулта дипломати енĕпе тунă ĕçсене, çавна май тĕнчери йывăрлăха çăмăллатас тата çĕршывсем хушшинче килĕштерсе ĕçлессине аталантарас тĕлĕшпе тунă ĕçсене мĕнле хаклатăр?

Ответ: Иртнĕ çулталăкра, мире юрататакан вăйсем тăрăшнипе, мире сыхласа хăварас тата çирĕплетес тĕлĕшпе тунă ĕçсем çĕршывсем хушшинчи хутшăнусенчи йывăрлăха çăмăллатма, государствăсем хушшинче пĕр-пĕрне ăнланас иессине тата килĕштерсе ĕçлессине аталантарма пулăшрĕç, ку тĕлĕшпе пысăк та лайăх ĕçсем тунă.

Мир ĕçĕшĕн пысăк вырăн йышăнакан çак факта кăтартса пани вырăнлă: Совет Союзĕпе Югослави хушшинчи хутшăнусене пĕтĕмпех йĕркелесе çитернĕ, Совет Союзĕпе Югослави халăхĕсем хушшинчи ĕмĕртенхи туслăха, пĕтĕмĕшле тăшмана хирĕç — фашистла захватчиксене хирĕç пĕрле кĕрешнипе çирĕпленнĕ туслăха тĕреклетнĕ.

Çавăн пекех тата Австри ыйтăвне ăнăçлă татса панине, ССР Союзĕпе Федеральнăй Германи Республики хушшинче дипломатилле хутшăнусем тытма пуçланине палăртас пулать.

Совет Союзĕпе Китай Халăх Республики, Польша, Чехословаки, Югослави тата социализмла аталану çулĕ çине тăнă ытти çĕршывсем хушшинчи тăванла туслăх тата пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси малалла çирĕпленсе пыни, çавăн пекех ССР Союзĕпе Инди, Бирма, Афганистан тата ытти çĕршывсем хушшинчи çыхăнусене анлăн сарса пыни тата туслă хутшăнусене аталантарни тĕнчери йывăрлăха малалла çăмăллатма тата пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлессине аталантарма пулăшнă хăватлă факторсем пулса тăраççĕ.

Тăватă держава — Англи, Франци, США тата СССР правительствисен Пуçлăхĕсен Женеври канашлăвĕ пек историлле событие уйрăмах палăртас пулать, вăл, тĕнчери çĕршывсем хушшинчи хутшăнусене мире тĕреклетес çулпа аталантарас ĕçре паллă вырăн йышăннă май, халăхсен ăс-тăнĕнче упранĕ.

Азипе Африкăри çĕршывсен Бандунгри конференцийĕ те мирĕн пысăк факторĕ пулчĕ. Унта икĕ континентри халăхсем çĕнĕ вăрçă хатĕрленине хирĕç, колониализма хирĕç, мĕнпур халăхсем хушшинчи туслăхшăн, пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлессишĕн каланă сăмахсем хăватлăн илтĕнчĕç.

Çак çулта государствăсем хушшинче пĕр тан праваллă хутшăнусем пулмалла текен паллă принципсене: пĕр-пĕрин территорийĕн пĕр-пĕтĕмĕшлĕхĕпе суверенитетне хисеплемелле, пĕр-пĕрне тапăнмалла мар, ытти çĕршывсен шалти ĕçĕсене хутшăнмалла мар, пĕр тан праваллă пулмалла тата пĕр-пĕрне усă тумалла, мирлĕ пурăнмалла текен принципсене йышăнакансем нумайланчĕç. Çав принципсем нумайрах та нумайрах государствăсен, çав шутра Югославин, Китай Халăх Республикин, Индин, Совет Союзĕн, Бирмăн тата Афганистанăн тулашри политикин никĕсĕ пулса тăраççĕ.

Çаксем пурте халăхсем çĕнĕ вăрçă хăрушлăхĕнчен хăтăлма, васкасах хĕçпăшалланнине чарса лартма, колониализма ĕмĕрлĕхех пĕтерме çине тăрса тăрăшнине, государствăсем хушшинче, вĕсен шалти стройĕ мĕнлине пăхмасăр, тĕнчери халиччен йĕркелемен ыйтусене татса парас тĕлĕшпе мирлĕн килĕштерсе ĕçлес шухăша çирĕплетме тăрăшнине кăтартса параççĕ.

Иртнĕ çулталăкри паха итогсен шутне 16 государствăна — Албание, Иордание, Ирландие, Португалие, Венгрие, Италие, Австрие, Румыние, Болгарие, Финляндие, Цейлона, Непала, Ливие, Камбоджăна, Лаоса, Испание Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине илни кĕрет. Çакă государствăсем мирлĕн килĕштерсе ĕçлес политикăн пысăк çĕнтерĕвĕ тата «сивĕ вăрçă» политикин поражени пулса тăрать. Çакă паллă: Хăрушсăрлăх Совечĕпе Генеральнăй Ассамблея çак паха решение Совет Союзĕ пуçарнипе йышăннă.

ССР Союзĕпе ытти чылай çĕршывсем пĕр-пĕрин патне парламентсен делегацийĕсем яни, государство деятелĕсем пĕр-пĕрин патне кайса çÿрени, çав шутра совет государствин деятелĕсем нумаях пулмасть Индире, Бирмăра тата Афганистанра пулни мире çирĕплетес тата халăхсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлессине тĕреклетес тĕлĕшпе тунă пысăк ĕç пулса тăрать. ССР Союзĕпе çав çĕршывсен государство деятелĕсем пĕр-пĕринпе тĕл пулни вĕсемпе Совет Союзĕ хушшинчи туслă çыхăнусене аталантармалли никĕсе тата та ытларах çирĕплетрĕ, çакă тĕнчери çĕршывсем килĕштерсе ĕçлессине пур енĕпе те аталантарас ĕçре питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çаксем пурте тĕнчери çĕршывсем хушшинче политика, экономика, культура тĕлĕшĕнчи çыхăнусене малалла вăйлатма тата аталантарма пулăшма тивĕçлĕ.

Совет Союзĕ ытти мĕнпур çĕршывсемпе лайăх хутшăнусем йĕркелес тесе хăйĕнчен килекен ĕçсене пурне те турĕ, тĕнчери халиччен татса паман ыйтусене йĕркелессишĕн тăрăшрĕ. Çакă паллă: анчах та тĕнчери чи пысăк ыйтăва — хĕçпăшалсемпе хĕçпăшаллă вăйсене чакарас, атомлă тата водородлă хĕçпăшала чарса лартас ыйтăва татса парас, çак ыйтусем тăрăх йышăннă решенисене пурнăçланине витĕмлĕн тĕрĕслесе тăма тĕнчери контроль туса хурас ĕçре халĕ те тивĕçлĕ утăм тăвайман-ха.

Пăшăрханмалла, хĕвеланăçĕнчи державăсем çак ыйту тăрăх хăйсем 1955 çулхи май уйăхĕнчен йышăнса тăнă позицие улăштарчĕç, хăйсем панă сĕнÿсене те пăрахăçларĕç. Вĕсем, чăннипе илсен, хĕçпăшалсемпе хĕçпăшаллă вăйсене чакармалла, атомлă тата водородлă хĕçпăшала чарса лартмалла тăвас идейăна та йышăнасшăн мар, çакă ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕсен Женеври канашлăвĕнче палăрчĕ.

Çав державăсен политики акă мĕн патне илсе пычĕ: Европăра хăрушсăрлăх туса хурас ыйтăва тата Германи ыйтăвне державăсен канашлăвĕсенче темиçе хутчен те сÿтсе явнă пулин те, ку ыйтусене халиччен те татса парайман-ха.

Çак факт пирки те каламасăр иртсе кайма çук: хĕвеланăçĕнчи хăшпĕр паллă ушкăнсене «Женева шухăш-кăмăлĕ» килĕшмест, вĕсем событисене тепĕр хут «сивĕ вăрçă» çулĕпе яма хăтланаççĕ. Вĕсем васкаса хĕçпăшалланассине тата ытларах вăйлатаççĕ, вăрçă хатĕрлеме каякан расходсене ÿстереççĕ. Çапла, НАТО совечĕ нумаях пулмасть НАТО çарĕсене ядернăй хĕçпăшал памалла, Хĕвеланăç Германие хăвăртрах çĕнĕрен хĕçпăшаллантармалла, Çывăх Хĕвелтухăçĕпе Вăтам Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсенче вăрçа хатĕрленес ĕçе вăйлатмалла, НАТО-н Хĕвеланăç Европăри сывлăш-çарĕн хисепне унăн виççĕмĕш пайĕ чухлĕ ÿстермелле, тесе каланă.

«Оборонăна» хатĕрленмелле текен суя сăлтавпа çав ушкăнсем малашне те ĕлĕкхи «вăйпа хăратас» политикăна тытса пыма хăтланаççĕ. Анчах çак политика, çар расхочĕсен пĕтĕм йывăрлăхне халăхсен ĕнси çине тиекен тата çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне ÿстерекен политика пулнине пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ. Васкаса хĕçпăшалланнипе, налогсем нумай тÿлемелли йывăрлăхпа тата пурнăç хакланса кайнипе, атомлă вăрçă хăрушлăхĕпе халăхсем килĕшме пултараймаççĕ. Вĕсен сассине Хĕвеланăçĕнчи халиченхи «вăйпа хăратас» политикăшăн тăракансен те шута илме тивет, мĕншĕн тесен çав политика тĕнчери ыйтусене ăнăçлă татса пама пулăшмасть кăна мар, пачах урăхла, çав ыйтусене йĕркелес ĕçе кăткăслатать, тĕнчери йывăрлăха тата государствăсем пĕр-пĕрне шаннине вăйлатать.

Ыйту: Сирĕн шутпа, мире малалла тĕреклетсе пыма тата тĕнчери хальхи ыйтусене татса пама май паракан шанăçсем мĕнле?

Ответ: Халăхсем мирлĕ те туслă пурăнма çав тери хытă тăрăшни çĕнĕ, 1956 çул, тĕнчери йывăрлăх малалла çăмăлланса тата мир тĕрекленсе пымалли çулталăк пулассин çирĕп шанăçĕ пулса тăрать. Çапла тума «вăйпа хăратас» политикăна пăрахăçлани тата ăна пĕтĕмпех манăçа хăварни кирлĕ. Пĕр-пĕр канашлура хăшпĕр ыйтусене татса парас ĕçре пулакан вăхăтлăх йывăрлăхсем халăхсен çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне хирĕç, тĕнчери çĕршывсем килĕштерсе ĕçлесе пурăнмалла тăвассишĕн кĕрешес хастарлăхне вăйсăрлатма пултараймаççĕ тата вăйсăрлатмалла мар.

Май килнипе усă курса, эпĕ юлашкинчен совет çыннисем Югослави халăхĕсемпе яланах тăванла туслă пулни çинчен тата халĕ те çавăн пек кăмăллăн пурăнни çинчен пĕлтеретĕп, Çĕнĕ çул çитнĕ май Югослави халăхне социализм строительствинче малаçне те çитĕнÿсем туса пыма пĕтĕм чĕререн ырă сунатăп.

ÇĔНĔ ÇУЛА КРЕМЛЬТЕ КĔТСЕ ИЛНИ

Декабрĕн 31-мĕшĕнче СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Н. А. Булганин Кремльте Çĕнĕ çула кĕтсе илессине йĕркеленĕ.

Кремльти Пысăк Дворецра Коммунистсен партийĕпе Совет правительствин руководителĕсем: К. Е. Ворошилов, Л. М. Каганович, А. И. Кириченко, Г. М. Маленков, А. И. Микоян, В. М. Молотов, М. Г. Первухин, М. З. Сабуров, М. А. Суслов, Н. С. Хрущев, П. К. Пономаренко, Н. М. Шверник, А. Б. Аристов, Н. И. Беляев, П. Н. Поспелов, СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн заместителĕсем А. П. Завенягин, А. Н. Косыгин, В. А. Кучеренко, П. П. Лобанов, В. А. Малышев, И. Ф. Тевосян, М. В. Хруничев пухăннă.

Хăнасем хушшинче Совет Союзĕн Маршалĕсем И. Х. Баграмян, С. С. Бирюзов, С. М. Буденный, А. М. Василевский, А. А. Гречко, Г. К. Жуков, И. С. Конев, К. А. Мерецков, К. С. Москаленко, В. Д. Соколовский, С. К. Тимошенко тата ытти паллă çар начальникĕсем пулнă.

Çĕнĕ çула кĕтсе илнĕ çĕрте пирĕн çĕршывăн государствăпа общество деятелĕсем, СССР Верховнăй Совечĕпе союзлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен депутачĕсем, совет интеллигенцийĕн представителĕсем — писательсем, ученăйсем, художниксем, артистсем, архитекторсем пулнă.

Çĕнĕ çула Кремльте çавăн пекех союзлă тата автономиллĕ республикăсенчи, Россия Федерацийĕнчи крайсемпе облаçсенчи партипе совет организацийĕсен руководителĕсем кĕтсе илнĕ. Хăнасем шутĕнче производство новаторĕсем, вĕсем хушшинче — токарь П. Б. Быков, строгальщик А. С. Лаврентьев, машинист В. Г. Блаженов, мастер-текстильщик А. С. Чутких, прядильщица С. А. Котова.

Çĕнĕ çула кĕтсе илнĕ çĕрте урăх çĕршывсен Мускаври дипломатилле представительствисен пуçлăхĕсем пулнă.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. Е. Ворошилов Çĕнĕ çул ячĕпе каланă сăмаха çав тери тимлĕн, хĕрÿллĕ оваци туса кĕтсе илнĕ. Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви тавра тачă пĕтĕçсе тăракан, вĕсем ертсе пыракан совет халăхĕшĕн, Совет çĕршывĕн малашнехи ÿсĕмĕшĕн, ССР Союзĕнчи ĕççыннисемпе социализм тата демократи лагерĕнчи халăхсем хушшинчи туслăхшăн, мĕнпур халăхсемпе туслă пурăнассишĕн, пĕтĕм тĕнчери миршĕн тостсем каланă.

Çĕнĕ çула Кремльте кĕтсе илни Коммунистсен партийĕн, Правительствăн тата совет халăхĕн никам сĕмĕрейми пĕрлĕхне кăтартса панă.

* * *

Çĕнĕ çул каç Кремльте пулнă пысăк улăв концертне совет искусствин чи паллă мастерĕсем хутшăннă. (ТАСС).

КРЕМЛЬТИ ÇĔНĔ ÇУЛ ЁЛКИ

Январĕн 1-мĕшĕнче Мускав Кремльне шкул ачисем пынă. Вĕсем Спасски, Боровицки хапхасене хаваслăн пырса кĕнĕ. Ачасем авалхи соборсен архитектурипе, вырăс мастерĕсен чаплă произведенийĕсемпе — Царь-пушкăпа Царь-колоколпа курнă. Соборнăй площадьре вырнаçтарса лартнă 30 метр çÿлĕш елка Мускав ачисене хытă тĕлĕнтернĕ. Ăна илемлетме икĕ вагон теттесемпе икĕ пин лампочка кирлĕ пулнă.

...Кремль дворецĕн анлă пусми çинче ачасене култарпăшсем кĕтсе илнĕ. Вĕсем ачасемпе палланă, вĕсене Çĕнĕ çул ячĕпе сывлăх сунă. Çавăнтах пĕчĕк ачасем юрататакан Петрушка та пулнă.

Музыка Георгиевски зала чĕнет. Зал варринче 17 метр çÿлĕш елка. Ун çине пĕрремĕш класра вĕренекенсем те, кăçал вĕренсе тухакан çамрăксемпе хĕрачасем те савăнса пăхаççĕ. Кунта юр сунă пек, юр пĕрчисем çаврăннă пек туйăнать.

Шурă «упасем» кĕмĕл трубасемпе калаççĕ. Улăв пуçланать. Сцена çинче — пирĕн çĕршыври тĕрлĕ халăхсен представителĕсем. Пурте Кремлĕн рубин çăлтăрĕ çине пăхаççĕ. Кăштах вăхăт иртсен унтан Снегурочка («Киноактер» театрĕн артистки Роза Макагонова) тухать. Вăл ачасене сывлăх сунать, Хĕл мучине çул кăтартакан çутăсем чĕртме сĕнет: вăл çил-тăман витĕр хăвăртрах Кремле çиттĕр, тет. Снегурочка Атăлтан нумайрах çутă пама ыйтать. Эстрадăра шалта Куйбышев гидроэлектростанцийĕн контурĕсем курăнаççĕ. Акă электричество хĕлхемĕсем йăлтăртатаççĕ: йăлтăртатакан çăлтăрсем тытнă хĕрачасем чупса иртеççĕ. Ку вăл Мускав лампочки патне Жигули токĕ пырать. Зала Хĕл мучи (Мускаври государство эстради артисчĕ Х. Петровский), пĕччен мар, Китайран, халăх демократи çĕршывĕсенчен килнĕ хăнасемпе пырса кĕрет. Хĕл мучĕ хăйпе пĕрле Индирен килнĕ хăна пурри çинчен пĕлтерет. Георгиевски залра пухăннă икĕ пин çурă ача: «Хинди, руси — бхай-бхай!» (индиецсемпе вырăссем — тăвансем) тесе кăшкăраççĕ. Çак саламлă сăмахсем илтĕннĕ хыççăнах Пысăк дворецран Инди хĕрачи тухать. Вăл Хĕл мучипе Снегурочка çине чечек çыххисем хурать.

Халĕ ĕнтĕ елка чĕртме те юрать. Мускаври шкул ачисем, тем пысăкăш елка тĕрлĕ тĕслĕ çутăсемпе чĕрĕлсен, хаваслăн алă çупаççĕ.

...Картина вĕçленет. Вăйăсем, елка тавра ташăсем пуçланаççĕ. Эстрада çинче, фойере артистсем хăйсен ăсталăхне кăтартаççĕ. Кăмăл тăваканнисем ярăнчăкпа ярăнма, карусель çине ларма пултараççĕ. Ачасем Владимирски залпа Гранови тăй палатăра савăнаççĕ. Авалхи тум тăхăннă хĕрачасем илемлĕ пÿртсен чÿречисенчен хăнасене парнесем параççĕ.

Асран кайми çак çĕнĕ çул праçникĕ нумай вăхăта пынă.

Ачасем Кремле икĕ эрне хушши çÿреççĕ, Кремльти чаплă елка икĕ эрне хушши хăйлăшать. (ТАСС).

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕнчен

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС обкомĕ КПСС членĕнче 1918 çултанпа тăнă, республикăри ертсе пыракан активлă работникĕсенчен пĕри

Лука Семенович

СПАСОВ

1956 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче вилни çинчен унăн çемйипе пĕрле хурланса пĕлтереççĕ.

Чăваш АССР Министрĕсен Советĕнче

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çапла йышăнчĕ:

Лука Семенович Спасова пытарассине организацилеме çаксенчен комисси тăвас: М. В. Зайцев (председатель), членсем — В. Я. Яковлев, А. И. Измайлов, П. Т. Трофимов, И. П. Енчиков, А. И. Иванов.

Çамрăк коммунистсене воспитани парассине лайăхлатмалла

Парти ретĕсем малта пыракан рабочисен, колхозниксен, интеллигенци йышĕпе ӳсе пыраççĕ. Юлашки пилĕк çул хушшинче кăна пирĕн районта 200 çынна яхăн партие кĕнĕ. Çак вăхăт хушшинче районти парторганизаци 30 процент ытларах ӳсрĕ.

Партие малта пыракан, ăнлануллă тата коммунизм ĕçне парăннă çынсем кĕреççĕ. 1955 çулта парти членĕн кандидатне илнĕ 47 çынтан колхоз производствинче малта пыраканнисем 20 çын, МТС механизаторĕсем 7 çын тата ялхуçалăх специалисчĕсем 3 çын шутланаççĕ. Партие илнисем хушшинче—14 хĕрарăм.

Парти членĕсен йышĕ ӳсни районти мĕнпур колхозсенче, МТС-ра, предприятисенче, учрежденисенче, чылай шкулсенче пуçламăш парторганизацисем тума май пачĕ. Халĕ районта пĕтĕмпе 52 пуçламăш парторганизаци.

Парторганизацисен кĕрешӳри пултарулăхне ӳстересси коммунистсене воспитани парас ĕçе тăтăшах лайăхлатса пынинчен килет. Çамрăк коммунистсем тесе кандидатсене кăна мар, çавăн пекех тата çамрăк членсене те шутламалла, мĕншĕн тесен коммунистсене политикăлла воспитани парасси вĕсене партие илнипех вĕçленмелле мар.

Пирĕн районти парторганизаци составĕнче коммунистсен ултă пайĕнчен пĕр пайĕ партие юлашки виçĕ çул хушшинче кĕнĕ. Çавăнтан районта çамрăк коммунистсен йышĕ пысăкки тата вĕсене воспитани парас тĕлĕшпе куллен тимлĕн ĕçлеме кирли лайăх курăнать. Вĕсене Парти Уставĕн требованийĕсене тата хăйсен обязанноçĕсене тӳрĕ кăмăлпа, ăнланулă пурнăçласа пыма вĕрентмелле. Кандидатсемпе ĕçлесси çине уйрăмах тимлĕ пăхмалла.

Виçĕ çул каялла пирĕн районта парти кандидачĕсем 70 çынна яхăн шутланнă, вĕсенчен нумайăшĕн кандидат стажĕ иртсе кайнă пулнă. Çак ситменлĕх вăл чылай парторганизацисенче партин шалти ĕçĕсене япăхтарса янинчен килнĕ.

Çак ситменлĕхсемпе йăнăшсене шута илсе, парти райкомĕ юлашки çулсенче çамрăк коммунистсене воспитани парас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерчĕ. Партие илес, çамрăк коммунистсене воспитани парас ыйтусене пленумсенче, райком бюровĕн ларăвĕсенче, пуçламăш парторганизаци секретарĕсен семинарĕсенче тата парти пухăвĕсенче час-часах сӳтсе явма тытăнтăмăр. Кандидатсемпе пĕчченшерĕн те калаçусем сахал мар ирттертĕмĕр. Стаж иртсе кайнă кандидатсем нумай шутланакан парторганизацисем çине уйрăмах тимлĕ пăхма пуçларăмăр.

«Правда», «Красное знамя», «Гвардеец» колхозсенче, машина-трактор станцийĕнче стаж иртсе кайнă кандидатсем уйрăмах нумайччĕ. Эпир вĕсем хушшинче, чи малтанах, КПСС Уставне вĕренессине йĕркелерĕмĕр, Устав требованийĕсене пурнăçлассишĕн çамрăк коммунистсен ответлăхне ӳстерсе пыма тăрăшрăмăр. Парти организацийĕсем стаж иртсе кайнă кандидатсене обществăлла ĕçе активлă хутшăнтарма тытăнчĕç.

Çак ĕçсем лайăх результатсем пачĕç. Кандидатсенчен ытларахăшĕ КПСС членне кĕме тивĕçлĕ пулчĕ. Халĕ районта 58 кандидатран тăваттăшĕн çеç кандидат стажĕ иртсе кайнă.

Парти членĕсемпе кандидачĕсене марксистла-ленинла воспитани парасси парти организацийĕсен пысăк задачи пулса тăрать. КПСС Центральнăй Комитечĕн кăтартăвĕсене пурнăçласа пырса, райкомпа пуçламăш парторганизацисем коммунистсен идейăлла-политикăлла пĕлĕвĕсене ӳстерме тăрăшаççĕ. Пур коммунистсене те—ваттисене те, çамрăккисене те—кашни çулах политикăлла вĕренӳве хутшăнтаратпăр. Малтанхи вăхăтра эпир пуринчен ытла кружоксене çеç интересленнĕ, унта вĕренме мĕнпур коммунистсене хутшăнтарма тăрăшнă. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнчен пуçласа, эпир коммунистсене, хăйсен пĕлĕвĕсене шута илсе, политикăлла вĕренӳ формисемпе меслечĕсене харпăр хăй тĕллĕн суйласа илме майсем туса патăмăр.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче КПСС членĕсемпе кандидачĕсем 226 çын политшкулсемпе кружоксенче вĕренеççĕ, 342 çын харпăр хăй тĕллĕн ĕçлесе вĕренеççĕ. Вĕренӳ çулĕ пуçланиччен кашни коммунистпа уйрăммăн калаçнă, вĕсене вĕренӳ формине суйласа илме пулăшнă.

Машина-трактор станцийĕнчи пуçламăш парторганизацинче 9 çамрăк коммунист хăйсен пĕлĕвĕсене КПСС историне вĕренмелли кружокра ӳстерме кăмăл тунă. Партире тăман 3 механизатор та КПСС историне вĕренме пулчĕç. Вĕренекенсем занятисене лайăх хатĕрленсе пыраççĕ. Пстров пропагандист вĕсене çирĕп пĕлӳсем парассишĕн тăрăшса ĕçлет.

Нумай коммунистсем кружокра тăрăшса вĕренеççĕ. Акă, трактор бригадин бригадирĕн помощникне Хисамутдинов юлташа парти членĕн кандидатне 1955 çулхи август уйăхĕнче илнĕ. Вăл — опытлă механизатор, анчах унăн пĕтĕмĕшле пĕлĕвĕсем сахалтарах. Пропагандист пулăшнипе, Хисамутдинов юлташ кружокра тăрăшса вĕренет, занятисенчи калаçусене активлă хутшăнать, учебниксĕр пуçне хаçат-журнал вулать. Вăл нумай хаçат-журнал илсе тăрать. Кружокра çавăн пекех парти кандидачĕсем Наумова, Краснов, Тарасов юлташсем те тăрăшса вĕреннине палăртмалла. МТС-ри нумай коммунистсем харпăр хăй тĕллĕн вĕренеççĕ.

Чкаловски МТС-ĕ тракторпа тумалли ĕçсен планне çултан-çулах ирттерсе тултарать, çĕрĕç культурине ӳстерсе пырать. 1955 çулта вăл, тракторпа тăвакан ĕçсен хăйне ларакан хакне йӳнетсе, государство укçине 79 пин тенкĕ перекетлерĕ. Кашни гектар çĕре сухаласа акма планпа палăртниччен 86 пус сахалтарах укça расходланă.

МТС ĕçне лайăхлатассишĕн парти организацийĕ çине тăрса тăрăшать. Кунти мĕнпур коммунистсенчен çуррине яхăн çамрăк коммунистсем шутланаççĕ. Ялхуçалăхне вăйлатассишĕн пыракан кĕрешӳре—коммунистсем малти ретре.

КПСС членĕ Н. Шайкин юлташ ертсе пыракан трактор бригади тракторпа тумалли ĕçсен çулталăкри планне 121 процент тултарнă. Ку бригада ĕçлекен Киров ячĕпе тăракан тата «Дружба» колхозсенче кашни гектартан 15-шер центнер тĕштырă пухса кĕртнĕ. Çамрăк коммунист Н. Наташкин юлташ сложнăй молотилка машиновечĕ пулса ĕçлет, вăл тырпула çапса кĕртмелли плана 314 процент тултарчĕ.

МТС-ра чи малта пыракан трактор бригадин бригадирĕ, КПСС обкомĕпе райкомĕн членĕ А. Михайлов юлташ çамрăк коммунистсене хăйĕн ĕçри опычĕпе паллаштарать.

Коммунистсене идейăлла воспитани пани, кулленхи практикăлла ĕçре писĕхтерни вĕсене çĕнĕ çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешме хавхалантарать. Ку тĕлĕшпе темиçе тĕслĕх илсе кăтартма пулать. Акă, Э. Сармаев комбайнер парти членĕн кандидатне 1953 çулта кĕнĕ. Кандидат чухне вăл марксистла-ленинла теорие тăрăшса вĕренчĕ, çĕрĕç культурине ӳстерессишĕн тăрăшса ĕçлерĕ, чи малта пыракан комбайнерсенчен пĕри пулса тăчĕ. Ăна МТС-ăн участокри механикĕ пулма уйăрса лартнă. 1954 çулта Сармаев юлташ КПСС членне кĕчĕ. Лайăх организатор пулнине тата обществăлла ĕçе активлă хутшăннине пула, отчетпа суйлав пухăвĕнче ăна парторганизаци бюровĕн членĕ пулма суйланă. Кăçал МТС коллективĕпе пуçламăш парторганизаци Сармаев юлташа колхоза яма сĕнчĕç. Вăл халĕ уйчченех юлса пынă «Герой» колхоз председателĕ пулса ĕçлет. Кĕске вăхăт хушшинчех çак колхоз чылай ăнăçлăрах ĕçлеме пуçларĕ.

Акă тата тепĕр тĕслĕх. А. Иксимотов юлташ партие кĕричченех Мичурин ячĕпе тăракан колхозра уй-хир бригадин бригадирĕ пулса ĕçленĕ. Парти членĕн кандидатне кĕнĕренпе вăл хăйĕн бригадине лайăхрах ертсе пыма тытăнчĕ. Халĕ унăн бригади — малта пыракан бригадăсенчен пĕри. Кăçал вăл кашни гектартан 16-шар центнер тĕштырă пухса кĕртнĕ. Иксимотов юлташ хăйĕн политикăлла пĕлĕвĕсене В. И. Ленин биографине вĕренмелли кружокра ӳстерет.

Çамрăк коммунистсене воспитани парас тĕлĕшпе ватă коммунистсем пысăк ĕçсем тума пултараççĕ. «Маяк» колхоз членĕ Рахимов юлташ парти членĕнче 1919 çултанпа тăрать. Вăл Кронштадтра моряк пулса граждан вăрçине хутшăннă. Çакăн çинчен вăл çамрăк коммунистсене час-часах каласа парать. Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе совет халăхĕ çамрăк Совет республикине тăшмансенчен хӳтĕлесе хăварни çинчен, унтан вара халăх хуçалăхне ура çине тăратассишĕн хастарлă кĕрешни çинчен ăнлантарать. Парти членĕнче 1921 çултанпа тăракан А. Гаврилова юлташ партин XVII-мĕш съездне делегат пулса хутшăннă. Çак съезд йышăннă решенисем çинчен вăл «Путь Ленина» колхоз членĕсене час-часах каласа ăнлантарать. Çакăн пек тĕслĕхсем татах илсе кăтартма пулать.

Çамрăк коммунистсем практикăлла ĕçре ӳссе, писĕхсе пыраççĕ. Анчах ку ĕçре ситменлĕхсем те пур. Партилле ĕç хушнă чухне хăшпĕр пуçламăш организацисенче коммунистсен пĕлĕвĕсемпе шухăш-кăмăлĕсене кирлĕ пек шута илмеççĕ. Сăмахран, пур коммунистсене те агитаторсем пулма çирĕплетнине тĕрĕс теме пулать-и-ха? Парти организацийĕнче кашни коммунистăнах чи кирлĕ, çав вăхăтрах хăйне кăмăла каякан ĕç тупма пулать.

Парти пухăвĕ — коммунистсене воспитани памалли шкул. Чылай парторганизацисенче пухусене КПСС Уставĕнче кăтартса панă сроксенче ирттереççĕ. Парти членĕсемпе кандидачĕсем ыйтусене сӳтсе явма активлă хутшăнаççĕ. Пухусенче вĕсем, критикăпа самокритикăна сарнă никĕс çинче, ĕçри ситменлĕхсене палăртма тата вĕсене пĕтерме хăнăхаççĕ.

Çамрăк коммунистсене воспитани парас ĕçре ситменлĕхсем те сахал мар. Вĕсем хушшинче партипе государство дисциплинине пăсакансем, йăларан пăсăлса кайнисем тĕл пулаççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ хăшпĕр коммунистсене партирен кăларма тивет.

Çамрăк коммунистсене воспитани парассине пур майсемпе те лайăхлатса пырасси—парторганизацисен пысăк задачи.

П. ТИМОФЕЕВ,
КПСС Чкаловски райкомĕн секретарĕ.

Идеологилле ĕç ыйтăвĕсемпе ирттернĕ канашлу

1955 çулхи декабрĕн 29-мĕшĕнче Шупашкарта КПСС райкомĕсемпе хула комитечĕсен иккĕмĕш секретарĕсемпе пропагандăпа агитаци пайĕсен заведующийĕсен тата районсемпе хуласенчи хаçатсен редакторĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Унта культурăпа искусство работникĕсемпе республикăра тухса тăракан хаçатсен корреспонденчĕсем те пулчĕç. Канашлу КПСС обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ Д. Абашов юлташ идеологилле ĕçĕн задачисем çинчен тунă доклада сӳтсе яврĕ.

Докладчик тата прение тухса калаçнă юлташсем парти райкомĕсемпе хула комитечĕсем, КПСС обкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ, Чăваш АССР Культура министерстви агитацилле-пропагандистла тата культурăлла-массăлла ĕçе ертсе пырас тĕлĕшпе ситеĕксĕр ĕçленине, вĕсен ĕçĕнче пысăк ситменлĕхсемпе йăнăшсем пулнине палăртрĕç.

Республикăри ертсе пыракан работниксем районсенче пулнă чухне,—терĕ КПСС Тăвай райкомĕн секретарĕ Иванов юлташ,—колхозниксем валли политикăлла докладсем туса памаççĕ. Сăмахран, нумай пулмасть, пирĕн районта Чăваш АССР Ялхуçалăх министрĕн заместителĕ Елкин юлташ пырса кайрĕ, вăл пĕр колхозра та доклад тумарĕ.

КПСС Улатăр хула комитечĕн пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ Салюкова юлташ КПСС обкомĕн пропагандăпа агитаци пайне кадрсен экономикăлла вĕренĕвне организацилес тĕлĕшпе ситеĕксĕр пулăшнăшăн критиклерĕ.

Учительсен республикăри çурчĕн директорĕ Кондракин юлташ, культура работникĕсен профсоюз обкомĕн председателĕ Чирикова юлташ тата ыттисем те политикăпа наука пĕлĕвĕсем саракан обществăн Чăваш республикинчи уйрăмĕпе республикăри Культура министерствин лекци бюровĕн ĕçĕнче пысăк ситменлĕхсем пуррине палăртрĕç.

КПСС Советски райкомĕн секретарĕ Мосновский юлташ республикăри хаçат редакцийĕсене критиклерĕ. Хаçатсем экономика ыйтăвĕсене çутатакан статьясем тата экономикăна вĕренессине вырăнсенче мĕнле йĕркелени çинчен калакан статьясем сайра хутра çеç пичетлеççĕ, ситменнинĕ вĕсем хуçалăхпа культура строительствин практикăлла задачисемпе çыхăнса тăмаççĕ.

КПСС Канаш хула комитечĕн секретарĕ Ласточкин юлташ пропаганда кадрĕсене вĕрентсе воспитани парас ĕçри ситменлĕхсем çинчен каларĕ.

Канашура КПСС обкомĕн секретарĕсем В. Яковлев тата М. Корабельников юлташсем сăмах каларĕç.

Кĕскен асăрхаттарнисем

Советски районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозра 250 çын ытла вырнаçмалăх клуб пур. Кунта кăçал нимĕнле культурăлла-массăлла ĕç те ирттерменççĕ, клуб ир те, каç та хупă. Унăн заведующийĕ В. Русаков ĕçлемесĕрех ĕç укçи илет.

П. АЧАКИН.

СЕНТЕР. Икĕ çул каялла «Колос» колхозăн Кĕнер çырми çинче икĕ арман, Лысенко ячĕпе тăракан колхозăн шыв арманĕпе çăм тапталмалли арманĕ ĕçлетчĕç. Анчах иртнĕ çултанпа вĕсем ĕçлеме чарăнчĕç. Асăннă артельсен правленийĕсем, Кĕнер шывне пĕвелеттерсе, армансене темĕншĕн ĕçлеттерме тăрăшмаççĕ.

Г. ЧЕВНОВ.

Учительсен январьти канашлăвĕсене йĕркеллĕ ирттерер

Вĕренӳ çулĕн пĕрремĕш çур çулĕ вĕçленчĕ. Январь уйăхĕн пуçламăшĕнче, шкулачисен хĕллехи каникулĕ вăхăтĕнче, республикăри пур хуласемпе районсенче те учительсен канашлăвĕсем пулса иртеççĕ.

Январь уйăхĕнче учительсен канашлăвĕсене ирттересси пирĕн çĕршывра йăлана кĕнĕ. Кăçал çав канашлусем партин XX-мĕш съездĕ умĕн пулса иртеççĕ. Ку вăл партипе правительство лартнă пысăк задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе учительсен тата çутĕç органĕсен ответлăхне татах та ӳстерет.

Кăçалхи вĕренӳ çулĕнче тăватă уйăх ĕçленĕ хыççăн вĕрентӳпе воспитани ĕçĕнче вăраха ямасăр сӳтсе явмалли ыйтусем сиксе тухрĕç. Вĕсене канашлусенче пăхса тухса, çийĕнчех конкретлă мерăсем йышăнни кирлĕ.

Иртнĕ çулсенче январьти канашлусен кун йĕркисене РСФСР тата Чăваш АССР Çутĕç министерствисем кăтартса панă. Кăçал вара кашни районти е хулари çутĕç пайĕсем, шкулсенчи педагогика коллективĕсемпе каласса татăлса, канашлусен кун йĕркине хăйсем палăртаççĕ. Çапла туни районти тата хулари çутĕç пайĕсен, педагогика коллективĕсен канашлăва усăллăрах ирттерес пуçарулăхне ӳстерме май парать.

Канашлусенче шкулсем тата çутĕç органĕсем всеобуч законне пурнăçлас, пурне те 10 çул вĕренмелли йĕркене куçма условисем хатĕрлес тĕлĕшпе мĕнле ĕçленине уççăн кăтартса парĕç. Çавăн пекех вĕсенче шкулсенчи вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăхлатас, политехникăлла вĕрентӳ ыйтăвĕсене татса парас, дисциплинăна çирĕплетес тата ытти ыйтусем пысăк вырăн йышăнĕç.

Шкулсемпе çутĕç органĕсен ĕçĕн çур çулхи итогĕсем нумай шкулсен педагогика коллективĕсем вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăхлатнине, теорипе практикăна çыхăнтарас тĕлĕшпе чылай çитĕнӳсем туни çинчен калаççĕ. Апла пулин те, шкулсемпе çутĕç органĕсен ĕçĕнче пысăк ситменлĕхсем пур. Учительсен январьти канашлăвĕсенче çав ситменлĕхсене тĕплĕн сӳтсе явни, вĕсене пĕтермелли майсене палăртса хуни кирлĕ.

Партин XIX-мĕш съездĕ хыççăн пирĕн шкулсем çĕнĕ вĕренӳ планĕсемпе çĕнĕ программăсем тăрăх ĕçлеме пуçларĕç. Шкул умĕнче çамрăксене аслă шкулсемпе техникумсене вĕренме кĕме кăна мар, промышленность, транспорт тата ялхуçалăхĕ валли квалификациллĕ кадрсем хатĕрлес задача тăрать. Политехникăлла вĕрентӳ — коммунизмла обществăн пур енчен те нумай пĕлекен строителĕсене хатĕрлемелли тĕп условисенчен пĕри. Вăтам шкултан вĕренсе тухакан кашни çамрăк хăй юратнă профессие суйласа илме, малашне хăй тĕллĕн ĕçлеме пултартăр. Учительсен январьти канашлăвĕсенче кашни шкулах политехникăлла вĕрентĕве пурнăçлас тĕлĕшпе мĕнле ĕçленине пăхса тухмалла. Наукăсен никĕсĕсене вĕрентнине производствăпа çыхăнтарса, урoксене пуян содержаниллĕ, лабораторилле тата практикăлла ĕçсене лайăх ирттерекен учительсем кашни хулара е районтах пур. Канашлусенче çав учительсен опычĕпе анлăн паллаштармалла. Çавăн пекех шкулта мастерскойсем уçас ыйтăва тĕплĕн сӳтсе явни, СССР Министрĕсен Совечĕ промышленность предприятийĕсен усăсăр выртакан оборудованийĕсене шкулсене парасси çинчен йышăннă постановлени мĕнле пурнăçа кĕрсе пынин пирвайхи итогĕсене туни те кирлĕ. Çутĕç органĕсемпе шкул руководителĕсен политехникăлла вĕрентӳ задачисене татса пама пулăшакан материальнăй база туса хурасси çине тимлĕн пăхмалла.

Опыт çакна кăтартса парать: промышленность предприятийĕсемпе МТС-сем шкулсене мастерскойсем уçса парас тĕлĕшпе пысăк пулăшу, практикăлла ĕçсене ертсе пыма инженерпа-техникла работниксем ярса пама пултараççĕ. Ку тĕлĕшпе Шупашкарти электроаппаратура завочĕ, пир-авăр комбиначĕ, Улатăрти пăравуссем юсакан завод, Етĕрне МТС-ĕ тата ытти чылай предприятисем лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕç. «Большевик» завод Çĕмĕрлери 3-мĕш вăтам шкул валли мастерской лартма тытăннă. Анчах шкулсене оборудованин, инструментсем парса пулăшассинчен пăрăнса тăракан руководительсем те пур-ха.

Алĕç урокĕсем, машиноведенипе, электротехникăпа практикумсем ирттерекен учительсен секцийĕсен занятийĕсенче шкулти чи лайăх мастерскойсен ĕçĕпе паллаштармалла.

Январьти канашлусенче шкул çумĕнчи опытлă участоксенче 1955 çулта тунă ĕçсене тишкерсе тухмалла.

Пирĕн республикăра кăçалхи вĕренӳ çулĕнче шкул тулашĕнче тăрса юлнă ачасен хисепĕ чылай пысăк. Вĕренӳ çулĕ пуçланнă кун Первомайски районĕнче кăна 200 ача ытла шкула пыман. Ноябрь уйăхĕнче вĕсенчен 60-шне вĕренӳве явăçтарайман. Пĕрремĕш черĕкре 44 ача вĕренме пăрахнă. 8—10-мĕш классене вĕренме тата 142 ача илсе çитереймен.

Всеобуч законне пурнăçлайманни шкул руководителĕсен, çутĕç органĕсен тата вырăнти Советсен тимсĕрлĕхĕнчен килет. Интернатсем уçмалли плана уйрăмах Сĕнтĕрвăрри, Тăвай, Чурачăк, Калинино, Советски районĕсенче çулсеренех тултарса пыраймаççĕ.

Шкулти комсомол тата пионер организацийĕсене ертсе пырас, класс тата шкул тулашĕнчи ĕçсене ирттерес тĕлĕшпе пысăк ситменлĕхсем палăраççĕ.

Учительсен январьти канашлăвĕсем учительсене партин XIX-мĕш съездĕ йышăннă историлле решенисене пурнăçлас, вĕрентӳпе воспитани ĕçĕн шайне ӳстерес ĕçе мобилизацилемелле. Кашни учитель вĕренекенсене çирĕп те тарăн пĕлӳ парас, урoксене идейăпа теори тата методика енĕпе тĕрĕс ирттерес, вĕренӳре елкĕрсе пырайманнисен тата пĕр класрах тепĕр çула юлакансен хисепне чакарас енĕпе çине тăрса ĕçлемелле. Учительсен педагогикăлла ăсталăхĕпе тавракурăмне ӳстерсе пымасан, çак задачăсене пурнăçлама май çук.

Парти тата совет органĕсен, учительсен канашлăвĕсене активлăн хутшăнса, вĕсене çӳллĕ пусăмра ирттерме пулăшмалла.

Н. ИВАНОВ.
Чăваш АССР Çутĕç министрĕн заместителĕ.

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

Чкаловски районĕнчи Тăрăн ял Совечĕн председателĕ Яковлев, колхоз председателĕ Ситов юлташсем ял Совет территорийĕнчи культурăпа çутĕç, медицина учрежденийĕсен çурчĕсемшĕн тăрăшмаççĕ, вĕсене хĕле хатĕрлесе çитереймерĕç, хутса ăшăтма вутă та турттарса пыман. Хĕле кĕнĕренпе культурăлла-массăлла ĕçсем питĕ япăхланнă, тесе пĕлтерчĕççĕ редакцие.

Çак ыйтăва Чкаловски райисполком ларăвĕнче сӳтсе явса тивĕçлĕ решени йышăннă. Тăрăн ял Совечĕн исполкомĕпе колхоз правленийĕ райисполком йышăннă решение пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Декабрĕн 12-мĕшĕ тĕлне 20 кубометр вутă турттарса пынă. Çитес вăхăтрах кирлĕ чухлĕ турттарса çитерме тăрăшаççĕ.

Хуçалăхпа культура строительствинчи çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн

Совет халăхĕ çĕнĕ çула, пин те тăхăрçĕр аллă улттăмĕш çула, пĕтĕм чĕререн хавасланса кĕтсе илчĕ. Рабочисем, хресченсем, интеллигенци 1955 çулта тăрăшса ĕçлерĕç, социализмла промышленноçа малалла аталантарма, ялхуçалăхне вăйлатма, Тăван çĕршыв наукипе культурине ӳстерсе пыма нумай вăй хучĕç.

Иртнĕ çулта пирĕн хăватлă йывăр индустри тата ытларах ӳссе çирĕпленчĕ. Ку вăл—иртнĕ çулта тунă чи пысăк çитĕнӳсенчен пĕри, мĕншĕн тесен йывăр индустри аталанăх социализмла экономикăн никĕсĕ пулнă, халăх пурнăçне лайăхлатса пымалли, Совет государствин вăй-хăватне тĕреклетмелли çăлкуçĕ пулнă, вăл малашне те çапла пулмалла та. Пирĕн çĕршыв халĕ металл, çĕр кăмрăкĕ, электроэнерги, нефть туса кăларассине, машинăсем тăвассине палăрмаллах ӳстерчĕ. Çĕнĕ заводсем, çĕр кăмрăкĕ кăлармалли шахтăсем, питĕ пысăк электростанцисем, чугун çул магистралĕсем тăвас ĕç сарăлнăçемĕн сарăласа пырать.

Промышленность таварĕсем туса кăларас тĕлĕшпе пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана, пĕтĕм продукци туса кăларасси енĕпе срокчен, 1955 çулхи майăн 1-мĕшĕ тĕлне, урăххи каласан, тăватă çул та тăватă уйăхра тултарнă. 1955 çулта промышленность производстви шайĕ, 1950 çулхипе танлаштарсан, 184 процента, 1940 çулхипе танлаштарсан, 318 процента çитрĕ.

1955 çул çĕршыва электрификацилес тĕлĕшпе тунă чаплă çитĕнӳсемпе паллă пулса юлчĕ. Иртнĕ çул хăватлă станцисем—Каховка, Горький, Нарва, Княжегубск электростанцийĕсем, тĕнчере чи пысăк электростанци Куйбышев электростанцийĕн малтанхи агрегачĕ ĕçе кайчĕ. Сталинград, Иркутск, Новосибирск, Бухтарма электростанцийĕсене тунă çĕрте пысăк ĕçсем пулса пыраççĕ. Ангара шывĕ çинче Братск гидроэлектростанцине тума тытăннă. Вăл тĕнчере чи пысăк гидроэлектростанци пулать, унăн хăвачĕ виçĕ миллион киловатран та иртмелле.

Çĕршыва индустриализациленĕ тата электрификациленĕ никĕс çинче миллионшар-миллионшар çынсен ĕçĕ çăмăлланчĕ. Халĕ ĕнтĕ эпир çĕнĕ те хăватлă техникăпа пуян. Пирĕн çĕр кăмрăк промышленноçĕнче комбайнсем ĕçлеççĕ, çав комбайнсенчен кашниех вуншар шахтер ĕçне туса пырать. Строительсен аллинче хăватлă машинăсемпе механизмсем, утакан экскаваторсем пур. Çав машинăсенчен кашниех вуншар пин рабочисемшĕн ĕçлеме пултараççĕ. Рабочие ытлашши вăй хумасăрах пысăк пахалăхлă продукци нумай туса кăларма май паракан çĕнĕрен те çĕнĕ станоксемпе машинăсем промышленноçра нумайланса пыраççĕ. Пирĕн çĕршыв уй-хирĕсенче тракторсем, комбайнсем тата миллионшар хресченсене, миллионшар хресчен хĕрарăмĕсене ĕмĕр-ĕмĕр вĕççĕн тунă ĕçрен хăтаракан пысăк тухăçлă ытти машинăсем ĕçлеççĕ.

Совет Союзĕнчи халăхсен туслă çемйинче пурăнакан чăваш ĕçчинĕсем те чаплă ӳсĕмсем турĕç. Пирĕн МТС-семпе колхозсенчен нумайăшĕ çĕнĕ çула социализмла обязательствăсене пурнăçланипе кĕтсе илчĕç. Промышленноçра малта пыракан çĕршер рабочисем хăйсен пилĕк çуллăх заданийĕсене срокчен тултарчĕç. Вун пĕр уйăх хушшинче пĕтĕм продукци туса кăлармалли плана 104 процент пурнăçланă. Плантан ирттерсе атă-пушмак, сăрă, тавар, чăлхасемпе çыхса тунă япаласем, пир-авăр, çăкăр-булка, макарон изделийĕсем нумай туса кăларнă. Республика столицинчи промышленноçра ĕçлекенсем пысăк çитĕнӳсем турĕç. Вĕсем тăрăшса ĕçленипе пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана срокчен тултарнă. Иртнĕ 11 уйăх хушшинче кăна планран ирттерсе 47.573 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă, планпа пăхниччен 3,5 миллион тенкĕлĕх нумайрах услам илнĕ, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли задание 109 процент чухлĕ тултарнă.

Пирĕн республика промышленноçĕ вăйланса пырать, предприятисенче технологи процесĕ çĕнелнĕçемĕн çĕнелет, çĕнĕрен те çĕнĕ машинăсем ĕçе кĕреççĕ, ĕçре малта пыракан меслетсене усă кураççĕ. Промышленноçра ĕçлекенсем валли мĕн кирлине пурне те туса панă. Апла пулин те республикăра кая юлса пыракан, производство заданийĕсене пурнăçлайман предприятисемпе промысла артелĕсем те пур-ха. 1956 çула промышленноçра ĕçлекенсем ĕçре пысăк çитĕнӳсем тунипе палăртса хăварма, çĕнĕ çулта социализмла обязательствăсене пур енĕпе те пурнăçлама тивĕç. Кăçал кая юлса пыракан предприятисем, промысла артелĕсем, стройкăсем пачах та пулмалла мар. Ĕç тухăçлăхне кунтан-кун ӳстерсе пырсан çеç çĕнĕ çулта ăнăçлă ĕçлесе пыма пулать. Çĕнĕ çулăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах кашни заводра, кашни фабрикăра, кашни цехра, кашни бригадăра производство программине тултарса пыни кирлĕ.

Пирĕн социализмла ялхуçалăх 1956 çула çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илчĕ. Колхоз хресченĕсем Коммунистсен партийĕ кăларса тăратнă задачăсене пурнăçлас тесе çине тăрса ĕçлеççĕ. Ялхуçалăхне малалла аталантарас тесе парти юлашки çулсенче чылай решенисем йышăнчĕ. Çав решенисене пурнăçласа, 1955 çулта, унчченхи çулхипе танлаштарсан, республикăра тĕштырă акакан лаптăк 13,3 пин гектар чухлĕ, çĕрулми лартакан лаптăк—6 пин гектар чухлĕ, кукуруза акакан лаптăк 10 хут ӳснĕ. Республикăра техникăлла культурăсем — кантăр, йĕтĕн, хăмлă, махорка акса тăвасси çулсеренех ӳссе пырать, сад, хурт-хăмăр ĕрчетесси, пахча çимĕç туса илесси вăйланать. Колхоз-миллионерсен шучĕ кашни çулах нумайланать.

Иртнĕ ялхуçалăх çулĕн итогĕсем начар мар пулин те эпир ялхуçалăхĕнчи ситменлĕхсем çинчен манма пултараймастпăр. Республикăра кая юлса пыракан машина-трактор станцийĕсем, колхозсем пур-ха, вĕсем уйрăмах ялхуçалăхĕн питех те кирлĕ отраслĕне — выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе аталантарас тĕлĕшпе ситеĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç республика ялхуçалăхĕн чи юлса пыракан отраслĕ пулса тăрать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе колхозсем йышăннă плана 1955 çулта пĕр выльăх енĕпе те тултарман. Выльăх-чĕрлĕхрен илекен продукцине те колхозсем ситеĕксĕр ӳстерсе пыраççĕ. Колхозсенче витесем тăвасси те япăх. Колхозсемпе промартельсенче тата районти промкомбинатсенче строительство материалĕсем туса кăларассине начар йĕркеленĕ.

Халĕ республикăри ĕçсыннисем, Çĕрпӳ районĕнчи выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекенсем, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем тата Чкаловски МТС-ĕнчи механизаторсем чĕнсе каланисене ырласа, 1956 çулта тĕштырă, аш-какай, сĕт тата ытти продукци туса илессине ӳстерессишĕн социализмла ăмăртăва хăватлăн сарчĕç. Республикăри ялхуçалăхĕшĕн хĕрӳ кунсем çывхараççĕ. Машина-трактор станцийĕсемпе колхозсен суралăва тĕплĕн хатĕрленсе кĕтсе илме тăрăшмалла. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене вăхăтра юсаса çитермелле. Уйрăмах удобрени кӳрсе илесе тата уя тиесе кăларас ĕç çине тимлĕн пăхас пулать. Вăрлăхсене ситеĕклĕ хатĕрлемелле, уя юр ытларах тытса хăвармалла. Хĕллехи вăхăтра колхозниксен агро-зоотехникăлла вĕренĕвне лайăхрах йĕркелени кирлĕ. Выльăх-чĕрлĕх пăхакансен обществăлла выльăх-чĕрлĕхе тĕрĕс-тĕкел хĕл каçарассишĕн тăрăшмалла, выльăх апатне перекетлĕн тытмалла. Çамрăк выльăхсене пăхса усрассине нихçанхинчен те ытларах лайăхлатмалла.

1956 çулта тырпул нумай туса илессишĕн, обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстерессишĕн кĕрешесси — республикăри колхозниксемпе механизаторсен чи кирлĕ тивĕçĕ.

Рабочисемпе тата колхозниксемпе пĕрле совет интеллигенцийĕ, наукăпа техника деятелĕсем, литературăпа искусство работникĕсем хуçалăхпа культура строительствинче çĕнĕ ӳсĕмсем тăвассишĕн кĕрешеççĕ. КПСС Центральнăй Комитечĕн июльти Пленумĕ йышăннă решенисене ăнăçлă пурнăçлас тесе, ученăйсемпе инженерсем промышленноçпа ялхуçалăх ыйтăвĕсене лайăхрах татса пама тăрăшаççĕ, халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсенче техникăлла прогресс тума пулăшаççĕ. Рабочисемпе хресченсен культурине ӳстерес, вĕсен пĕлĕвĕсене ӳстерес задача ăнăçлă пурнăçланса пырать. Пирĕн çĕршывра тĕрлĕ йышши шкулсемпе аслă шкулсенче миллионшар çамрăксем вĕренеççĕ. Чăваш республикинчи шкулсенче кăна халĕ 9.842 учитель ĕçлет. Пирĕн çĕршывра çитес çулсенчех пурне те вуннă çул вĕрентмелле тума лайăх условисем пур. Тĕнчере нимĕнле çĕршывра та Совет Союзĕнчи пек çутĕçе аталантарма паха условисем туса паман.

Пирĕн çĕршывра форма тĕлĕшĕнчен национлле, содержани тĕлĕшĕнчен социализмла культура хăватлăн аталанса пырать. Чăваш литературипе искусстви те пысăк ӳсĕмсем тунă. Чăваш писателĕсем, художникĕсем тата композиторсем асра юлакан, лайăх произведенисем çырнă. Совет наукипе культури ӳссе чечекленни пирĕн çĕршывра совет çыннисен творчествăлла активлăхĕ пĕрмай ӳссе пынине кăтартать. Çакна Коммунистсен партийĕ куллен пулăшса пынипе тунă. Парти совет çыннисене воспитани парассине пĕрмай лайăхлатма тăрăшать.

Иртнĕ çулталăкра социализмла лагерьти çĕршывсем хушшинчи туслăх татах çирĕпленчĕ. Çав çĕршывсенчи халăхсем пĕр-пĕрне туслăн ĕçленипе тата пĕр-пĕрне пулăшса пынипе экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен пысăк çитĕнӳсем турĕç. Демократилле çĕршывсенче ĕçсыннисен пурнăçĕ татах та лайăхланчĕ.

Иртнĕ 1955 çулта тĕнчери халăхсен пурнăçĕнче паллă событисем пулса иртрĕç. Уйрăмах тĕнчери çыхăнусене малалла аталантарас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттернĕ. Совет Союзĕн руководителĕсем Индие, Бирмăна тата Афганистана кайса килнине миршĕн, тĕнчере хăрушсăрлăх туса хурассишĕн кĕрешекен халăхсем тулли кăмăлпа йышăнчĕç. 1955 çулхи опыт çакăн çинчен калать: Совет Союзĕ тытакан политика тĕрĕс политика, ăна миршĕн тăракан халăхсем ырлаççĕ.

Совет правительстви тĕнчери çĕршывсем хушшинчи ыйтусене мирлĕн, калаçусем ирттернипе татса пама кирли çинчен каланисем пурнăçланса пыраççĕ. Тĕнчери общественность, ырă шухăш-кăмăллă çынсем 1955 çулта Совет правительстви тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатас тĕлĕшпе туса ирттернĕ ĕçсене кăмăлласа ырлаççĕ.

Совет халăхĕ малашлăх çине хăюллăн пăхать. Совет çыннисем умĕнче пысăк задача — коммунизм обществи туса хурассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешес задача тăрать. Совет халăхĕ Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе çĕнĕрен те çĕнĕ çитĕнӳсем тăвать. Пирĕн Тăван çĕршыври ĕçсыннисем çĕнĕ çула пысăк ӳсĕмсемпе кĕтсе илчĕç, вĕсем кăçал та Совет государствин хăватне малалла тĕреклетессишĕн, коммунизм тăвассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешĕç.

Д. МИТЬКОВ.
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ.

МАЛТА ПЫРАКАНСЕН ОПЫТНЕ АНЛĂ САРАР

Тухăçлă тырпул

Тухăçлă тырпул çитĕнтересси хамăртан килет. Иртнĕ çуркунне çанталăк условийĕсем начартарах пулчĕç. Кĕрхи тырă калчисем чылай лаптăксем çинче çĕрсе пĕтрĕç. Апла пулин те, пирĕн колхоз пысăк тухăçлă тырпула туса илчĕ. Эпĕ ертсе пыракан пĕрремĕш бригада 102 гектар çинчен кашни гектартан 26-шар центнер тĕштырă пухса кĕртрĕ. Эпир 77 гектар çинчен кашни гектартан 30-шар центнер, 40 гектар çинчен кашни гектартан 40-шер центнер сурхи тулă çапса илтĕмĕр.

Колхозра тырпул тухăçлăхĕ ÿсес ыйту çĕрĕ культурине лайăхлатнинчен килет. Уй-хире эпир тислĕк, торф, юшкăн, минераллă удобренисем нумай тăкатпăр. Органикăлла-минераллă удобренисен хутăшĕпе çĕрĕн уйрăмлăхĕсене шута илсе усă куратпăр. Акăнакан çĕрĕн кашни гектарĕ пуçне вăтам шутпа 40—60 тонна тислĕкпе торф е тислĕкпе фекали хутăштарса хунă компостсем кăларатпăр.

Удобренисене мĕнле культурăсем айне умĕн тăкмалла-ха? Пирĕн таса çĕртме çук. Органикăлла удобренисене эпир çĕрулми лартмалли, кукуруза акмалли уйсене тăкатпăр. Вĕсем хыççăн вара кĕрхи тырăсем, сурхи тата кукуруза акатпăр. Çĕрулми лартса тунă уя çуркунне сурхи тулă акатпăр, унтан пысăк тухăç илетпĕр.

Сурхи тырăсене эпир тарăн сухаласа кĕрхи çĕртме тунă уйсене акатпăр. Суркунне кĕрхи çĕртмене «зиг-заг» сÿресемпе сÿрелетпĕр, çапла вара тăпрара нÿрĕк ытларах тытса хăваратпăр. Сÿрелĕс умĕн кашни гектар çине 5—7-шер центнер минераллă удобренисем сапса тухатпăр. Çĕр писнĕçемĕн культиваци тăватпăр, çийĕнчех акатпăр.

Сурхи тулла апрель уйăхĕн иккĕмĕш е виççĕмĕш вунăкунлăхĕнче акнă. Çакă вăл ÿсентăрана тăпрари нÿрĕкпе туллинрех усă курма май парать. Иртерех акни иртнĕ çул та усăллă пулчĕ.

Калчасене лайăх пăхса çитĕнтеретпĕр, вĕсене апат паратпăр. Пĕлтĕр эпир тырпул пухса кĕртес ĕçе ытти çулхисенчен урăхларах организацилерĕмĕр. Пирĕн сурхи тулă ÿксе пулчĕ, çавăнпа эпир ăна алăпа вырса пухрăмăр. Кашни колхозника уйрăм участоксем уйăрса патăмăр. Çапла тунипе ĕçе ватти те, çамрăкки те тухрĕ. Тырпула вара кĕске вăхăтра тата пĕр тăкаксăр пухса кĕртрĕмĕр.

Пирĕн бригада халĕ çитес çуракине тĕплĕн хатĕрленет. КПСС XX-мĕш съезчĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса, вăл пысăк обязательство йышăнчĕ, ăна чыслăн пурнăçласа пырать.

А. АШАНИН.
1-мĕш бригадăн бригадирĕ,
Социализмла Ĕç Геройĕ.

Кашни ĕнерен—3.500 килограмм сĕт

КПСС Центральнăй Комитечĕн январьти Пленумĕн решенийĕсене пурнăçласшăн кĕрешсе, пирĕн доярккăсем иртнĕ хуçалăх çулĕнче вăтам шутпа кашни ĕнерен 2.978-шар килограмм сĕт суса илчĕç. Кашни 100 гектар çĕр пуçне обществăлла хуçалăхра 187,8-шер центнер, колхозниксен хуçалăхĕсемпе пĕрле шутласан—441,5-шер центнер сĕт илнĕ.

Пирĕн колхозра выльăх-чĕрлĕх кадрĕсене ялланлăха çирĕплетнĕ. Доярккăсенчен чылайăшĕ фермăра нумай çул хушши ĕçлессĕ. Вĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕçĕн мастерĕсем пулса тăчĕç, Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине хутшăнчĕç.

Доярккăсен ĕçне эпир уйрăммăн шутласа пыратпăр. Пилĕкçулхи иртнерех сĕт суса илнĕшĕн хушса тÿлетпĕр. Нумаях пулмасть эпир хамăр колхозра сĕт суса илес тĕлĕшпе кашни доярккăна пилĕккунлăх тата уйăхлăх заданисем парассине йĕркелерĕмĕр. Пилĕккунлăх задание пурнăçланă доярккăна ĕçкунĕ икĕ хут ÿстерсе тÿлетпĕр. Сĕт суса илес тата çамрăк выльăхсене пăхса ÿстерес тĕлĕшпе уйăхри задание пурнăçланă доярккăна тата пăру пăхакана уйăх хушшинчи ĕçшĕн 50 процентне укçан тÿлетпĕр, çавăн пекех тата ĕçкунĕ çырса паратпăр.

Выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăша ÿстерес ĕçре апат çитеçлĕклĕ хатĕрлени пысăк вырăн йышăнать. Эпир çуллахи вăхăтра пур йышши обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли те апат хатĕрлетпĕр. Выльăхсене тулăх тăрантарса усратпăр. Çак ĕçре пире кукуруза нумай пулăшать. 1954—1955 çулсенчи хĕллехи уйăхсенче тăрантарма эпир кашни ĕне валли 8-шар тонна кукуруза силосĕ хатĕрленĕ пулсан, çак хĕл валли—12-шер тонна хатĕрлерĕмĕр. Ĕнесене çуллахи вăхăтра симĕс курăкпа, уйрăмах кукурузăн симĕс массипе, тăташах тăрантартăмăр. Ĕнесене хĕллехи вăхăтра тăрантарма кукуруза силосĕсĕр пуçне 2,5-шер тонна клевер утти, 10-шар центнер концентратлă апатсем хатĕрлерĕмĕр. Кашни ĕнене талăкра 30—35-шер килограмм кукуруза силосĕ, 8-шар килограмм утă, 2—3-шер килограмм концентратлă апат паратпăр.

Концентратлă апатсем те сĕт тухăçлăхне ÿстерме хытă пулăшассĕ. Ĕнесен рационне тĕштырă тата сĕтеклĕ апатсем кĕртни кĕске вăхăт хушшинчех сĕт суса илессине икĕ-виçĕ хут ÿстерме, çулталăкра кĕçех вăтам шутпа кашни ĕнерен 5.000—7.000 литр таран сĕт суса илме май парать.

Ĕнесене пăхас ĕçе лайăх йĕркелени сĕт тухăçлăхне палăрмаллах хăпартма май пачĕ. Октябрьпе ноябрь уйăхĕсенче вăтам шутпа кашни ĕнерен 368-шар литр ытла сĕт суса илнĕ, пухнакан пĕтĕм сĕтĕн хисепĕ, 1954 çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, 20 пин килограмм ÿсрĕ. Икĕ уйăхра кашни 100 гектар çĕр пуçне 24,07 центнер сĕт илнĕ. Çак хĕлле сĕтри çу хисепĕ чылай ÿсрĕ.

Пирĕн колхоза килекен экскурсантсем манран час-часах çапла ыйтаççĕ:

— Ĕнесенчен сĕт тухăçлăхне ÿстерме сире мĕн пулăшрĕ?

Çак ыйту çине эпĕ яланах çакăн пек ответлетĕп:

— Сĕт ытларах суса илес тесен, виçĕ условие кăна пурнăçламалла: пĕрремĕшĕ—ĕнесене лайăх тăрантармалла, иккĕмĕшĕ—шăвармалла, виççĕмĕшĕ—сумалла. Çаксене тивĕçлипе йĕркелер, вара сирĕн те сĕт тухăçлăхĕ ÿсет, тетĕп.

Пирĕн ĕне ферми 1954 тата 1955 çулсенче Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкине хутшăнчĕ. Анчах пирĕн ферма работникĕсем тунă çитĕнÿсемпе лăпланса лармаççĕ. 1956 çулта вĕсем кашни ĕнерен 3.500-шер килограмм сĕт суса илме обязательство йышăнчĕç. Ăна пурнăçласан, пирĕн колхоз çĕнĕ хуçалăх çулĕнче кашни 100 гектар çĕр пуçне 260-шар центнер сĕт илет.

А. ДОМАНИН.
Ĕне фермин заведующийĕ, Социализмла Ĕç Геройĕ.

Хуçалăха пĕлсе ертсе пымалла, çĕрпе тĕрĕс усă курмалла

С. КОРОТКОВ,
Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлă колхоз председателĕ, Социализмла Ĕç Геройĕ.

Пирĕн колхоз условийĕсем Чăваш республикинчи ытти колхозсен условийĕсенчен нимĕнпе те уйрăлса тăмаççĕ. Çĕр кăллĕ тата хăйăрлă, удобренисем тăкмасăр, çĕрпе пĕлсе сухаласа çемçетмесĕр, пысăк тухăçлă тырпул туса илеймĕн.

Пирĕн артельти колхозниксем, механизаторсемпе пĕрле ĕçлесе, яланах пысăк тухăçлă тырпул туса илме пуçларĕç. 1955 çулта эпир кашни гектартан вăтам шутпа 18,4-шер центнер тĕштырă туса илтĕмĕр. Кольцовка ялĕнчи Александр Ашанинпа Петр Пупин юлташсем ертсе пыракан бригадăсем кашни гектартан 20-шар центнер тĕштырă, 30-шар центнер сурхи тулă туса илчĕç.

Государство умĕнчи мĕнпур обязательствăсене пурнăçланă, МТО ĕçленĕшĕн натуроплата тыррине парса татнă, усăвпа пăхнă мĕнпур фондсене çителĕклĕ хывса хăварнă хыççăн, юлашки çиччĕ çул хушшинче кашни колхозник килĕ пуçне çулталăкра вăтам шутпа 171-шер пăт тырă валеçсе панă. 1955 çулта колхозниксене аванс шучĕпе кăна кашни ĕçкунĕ пуçне 3-шер килограмм тырă тата 5-шер тенкĕ укçа валеçсе панă. Александр Першуткин колхозникăн çемйи, октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне 1.636 ĕçкунĕ тунăскер, аванс шучĕпе 300 пăт ытла, Михаил Чигитов колхозник 250 пăт, Парасковьи Сурова колхозница 252 пăт тулă илчĕç. Пирĕн колхозра ĕне, сысна, сурăх, хур тата урăх йышши кайăк-кĕшĕк усраман пĕр хуçалăх та çук. Хăйсен выльăх-чĕрлĕхне усрама колхозниксем ĕçкунĕсене утă-улăм тата сĕтеклĕ апатсем, çавăн пекех концентратлă апатсем те нумай илеççĕ.

Çĕр ĕçне пуринчен ытла механизаторсем, тракторĕсем тата прицепщиксем тăваççĕ. Çĕрĕç культурине ÿстересси, пысăк тухăçлă тырпул туса илесси вĕсенчен нумай килет. Колхоз руководителĕсен механизаторсен кадрĕсене хакламалла, вĕсен нушисене пĕлмелле, вĕсемшĕн куллен тăрăшмалла.

Пирĕн тырпул ăстисем тата механизаторсем колхоз пуянлăхĕн тĕп çăлкуçĕ пулса тăракан колхоз çĕрĕпе лайăхрах усă курма тăрăшаççĕ. Эпир хамăр республикăра пуринчен малтан пĕр вăхăтрах çĕре вырăнти тата минераллă удобренисем тăкса тарăн сухаласине пурнăçлама тытăнтăмăр. Ялта колхоз организациленĕ малтанхи çулсенче эпир тăпрана 10—12 сантиметр тарăнăш сухаланă, каярахпа, МТС тракторĕсем пулăшнипе, 20—22 сантиметр тарăнăш сухаланă. Сухаланă сийĕн тарăнăшне майĕпен ÿстерсе пынă пулсан, эпир çак ĕçе нумай çулсем хушши туса пынă пулăттăмăр. 1948 çулта тракторсемпе çĕртме сухаланă чухне сухаланакан сийе тÿрех 8—10 сантиметр чухлĕ тарăнлатрăмăр. Ун чухне вара кашни гектар çине 40—60 тонна çĕрнĕ тислĕк, 2—3 центнер суперфосфат тата 2-шер центнер азотлă тата калиллĕ удобренисем тăкрăмăр. Кашни çулах эпир органикăллă тата минераллă удобренисем нумай кăларатпăр.

Кольцовка уйĕпе пĕрлешнĕ Зеленовка уйĕ мĕн пайне танлаштарса пăхатăн та, çак уйрăмлăха куратăн: Кольцовкăра, темиçе çул хушши çĕре тарăн сухаланине, органикăллă тата минераллă удобренисем нумай тăкса çемçетнине пула, кашни колхозник хуçалăхĕ пуçне 75-шер центнер тĕштырă тивет, Зеленовкăра вара—40-шер центнер. Кольцовкăпа Зеленовкăн çĕр лаптăкĕ пĕр пекех, çĕрĕ те пĕр майлăх, пухăнакан пĕтĕм тырпулăн хисепĕ вара пачах урăхла: кольцовкăсем кашни çулах вăтам шутпа 16 пин центнер ытла тĕштырă пухса илеççĕ, зеленовкăсем—7 пин центнер кăна. Халĕ те Зеленовка ялĕнчи уй-хир бригадисем Кольцовка ялĕнчи уй-хир бригадисенчен чылай сахалрах тĕштырă туса илеççĕ-ха. Вĕсем çĕрĕç культурине лайăхлатса тырпул тухăçлăхне ÿстерсех пыраççĕ.

Эпир çĕре сухалассине 14—15 сантиметртан 30—35 сантиметр тарăнăшне çитертĕмĕр. Тарăн сухалани тата çĕре удобренисемпе çемçетни тырпул тухăçлăхне хăвăрт ÿстерме мĕн тери пулăшнине çак фактсем лайăх кăтартса параççĕ: 1951 çулта çĕре 30 сантиметр тарăнăш сухаланă тата кашни гектар çине 50-шар тонна тислĕк тăкнă лаптăксенче кашни гектартан 47-шер центнер сурхи тулă туса илнĕ. Çĕре 30 сантиметр тарăнăшĕнчен те ытларах сухаланă участоксенче 18 гектар çинчен кашни гектартан 50,1-шер центнер сурхи тулă тата 64 гектар çинчен кашни гектартан 54,3-шер центнер сĕлĕ туса илнĕ. 1955 çулта Социализмла Ĕç Геройĕ Александр Ашанин ертсе пыракан бригада çĕре 35 сантиметр тарăнăш сухаланă, кашни гектар çине 50-шар тонна тислĕк, 5—7-шер центнер минераллă удобренисем кăларнă. Çак бригада 40 гектар çинчен кашни гектартан 40-шер центнер сурхи тулă пухса илме пултарчĕ.

Пирĕнтен час-часах çапла ыйтаççĕ:

— Сирĕн тĕштырă та, кукуруза та, çĕрулми те, нумай çул ÿсекен курăксен утти те яланах пысăк тухăçлă пулаççĕ. Мĕнле майпа эсир çавăн пек пысăк тухăçлă тырпул çитĕнтеретĕр?

Çак ыйту çине эпир çапла ответлетпĕр:

Вăйлă тырпул туса илмелли никĕс вăл—тислĕк тата минераллă удобренисем. Пирĕн республика условийĕсемшĕн тислĕк—вăл çăкăр. Эпир хамăр колхозра тислĕке обществăлла сурт-йĕрсенчен çеç мар, мĕнпур колхозниксен килĕсенчен пуçса уя кăларнипе пысăк тухăçлă тырпул çитĕнтеретпĕр. Кашни çулах уя 24—25-шер пин тонна тислĕк кăларатпăр. Артелĕн сухаланан çĕр лаптăкĕ 1.800 гектар шутланать, çапла кашни гектар çине çулленех 13-шер тонна ытла тислĕк тăкатпăр.

Эпир калаça пăхнипе итлесен, хăшпĕр экскурсантсем пире çапла калаççĕ:

— Эсир уя нумай удобрени кăларатăр. Ку питĕ лайăх. Анчах çавăн пек пысăк ĕçе туме мĕнле вăй çитеретĕр? Ку вăл питĕ йывăр ĕç вĕт?

— Колхозра ĕçсем нумай,— ответлеççĕ пирĕн колхозниксем,— анчах эпир çав ĕçсене тума нимĕн те хĕрхенместпĕр: вăй хумасăр пĕверен те пулă туртса кăлараймăн. Эпир тăрăшса ĕçлетпĕр, çавăнпа пысăк тухăçлă тырпул çитĕнтеретпĕр, колхозăн пуянлăхне ÿстеретпĕр.

Колхозниксемпе механизаторсем тăрăшнипе пирĕн çĕр лайăхланчĕ. Колхозри тырпул ăстисем ахальтен мар çапла калаççĕ: пирĕн çĕрсем çĕнелчĕç тата тĕпренех уйăнчĕç. Ку вăл чăнах та çавăн пек: ĕçе юратакан колхозниксемпе механизаторсем хăйсен аллипе пирĕн чухăн çĕре тĕлĕнмелле тухăç паракан пуян çĕр туса хучĕç.

Çĕре пуянлатнипе пĕрлех малта пыракан агротехникăн ытти правилисене пурнăçа кĕртсе пыни, çăмăхран, пучахлă культурăсене хĕреслĕ тата ансăр ретлĕ майпа акни, кĕрхи тырăсен калчисене апат пани, сортлă та пысăк тухăç паракан вăрлăхсем акни, вĕсен акмалли нормине ÿстерни, пĕрчĕлетнĕ суперфосфатпа усă курни те тырпул тухăçлăхне ÿстерме нумай пулăшрĕ.

Иртнĕ çуркунне пирĕн кĕрхи тырăсем пысăк лаптăк çинче пĕтрĕç. Эпир хăраса ÿкмерĕмĕр, вăхăта сая ямасăр çĕрсе пĕтнĕ кĕрхи тырăсем çине сурхи тулă акрăмăр. Акмалли нормăна, юр айĕнчен тухнă мĕнле тухăçне шута илсе, кашни гектар çине 1,5—2-шер центнер палăртрăмăр. Результатсем аван пулчĕç: ыраш та, сурхи тулă та пĕр вăхăтра пиçсе çитрĕç. Петр Дмитриевич Пупин ертсе пыракан бригада 35 гектар çинчен кашни гектартан 21,2-шер центнер кĕрхи тырă туса илчĕ. Кĕрхи тырă калчисем çине тулă акман колхозсем вара кашни гектартан 8—10-шар центнер кăна тырă пухса илчĕç. Эпир çапла калатпăр: çĕрпе тĕрĕс усă курмалла, тырпула алăран кăларса ямалла мар.

Çĕрĕç культурине лайăхлатни, çĕре удобренисем нумай тăкса пуянлатни пире 1953 çултанпа таса çĕртмене пăрахăçлама, унта пăрçа, çĕрулми тата ытти культурăсем акса тума май пачĕ. Халĕ эпир çĕртме пуссине сурхи тулă та, кукуруза та акатпăр. Çĕртме уйне çĕрулми лартни çав культура лаптăкне виçĕ хут ÿстерме май пачĕ. 1952 çулта 78 гектар çĕрулми лартнă пулсан, пĕлтĕр 220 гектарне лартнă, вăл шутран 100 гектарне таса çĕртме çине лартнă. Кунсăр пуçне çĕртме пуссине ир пулакан «торондаг» сорт пăрçана 113 гектар акнă.

Çĕртме пуссине удобренисем нумай кăларнă. Колхоз çĕртме пуссипе пĕлсе усă курнипе 22 пин центнер ытла çĕрулми тата 2 пин центнер ытла пăрçа ытларах туса илчĕ.

Çĕрпе пĕлсе усă курни унтан тупăш илессине пĕрмай ÿстерме май парать. 1955 çулта эпир акăнакан çĕрĕн кашни гектарĕ пуçне 8,3-шер центнер тĕштырă, 8-шар центнер çĕрулми, 10-шар центнер нумай çул тата пĕр çул ÿсекен курăксен ути тата 43,5-шер центнер кукурузăн симĕс массине туса илтĕмĕр.

Пирĕн колхоз опычĕ кукуруза тĕштырăпа выльăх апачĕ тумалли паха культура пулса тăнине ĕненмелле кăтартса пачĕ. 1954 çулччен эпир силос тума хĕвелçаврăнăш акнă. Кукуруза хĕвелçаврăнăшĕнчен нумай усăллăрах. Хĕвелçаврăнăш кашни гектартан 400 центнертан ытла симĕс масса парайместь, тата унăн пахалăхĕ те кукуруза массинчен чылай каярах. Хĕвелçаврăнăшĕнче вăтам шутпа 13,3 процент протеин тата 10—12 процент сахăр, кукурузăра вара—14,5 процент протеин, 22 процент сахăр шутланать. Хĕвелçаврăнăшĕнче шыв тата выльăх-чĕрлĕх организмĕнче йывăр ирĕлекен япаласем нумай, çавăнпа вăл кукурузăпа нимĕн чухлĕ те танлашма пултараймасть. Акă, пирĕн 40 гектар йышăнакан кукуруза участокĕ пулнă. Çав участокран эпир вăтам шутпа кашни гектартан 500-шер центнер симĕс масса туса илтĕмĕр. 100 килограмм кукуруза силосĕ апат единици тăрах пĕр пăт сĕлĕпе танлашать. Çапла, пĕр гектар кукуруза пире 50 центнер сĕлĕ чухлĕ апат пачĕ. Эпир кукурузăна юратса çитĕнтеретпĕр, унăн калчисене лайăх пăхса ÿстеретпĕр, кашни гектара лайăх кăпкалатса çемçетсе тăратпăр, кукуруза участокĕсенче пĕр сумкурăкĕ те хăвармастпăр. Кукурузăна пула, 1955 çулта артель 8.000 тонна паха силос хывса хăварчĕ, пур йышши выльăх-чĕрлĕх валли те сĕтеклĕ апат çителĕклĕ хатĕрлерĕ. Çуллахи вăхăтра выльăхсене кукурузăн симĕс массипе тăрантаратпăр, кĕркуннерен пуçласа ĕнесене, сыснасене тата сурăхсене кукуруза силосĕ паратпăр. Çакă вара ĕнесенчен сĕт суса илессине ÿстерме тата çĕршер сысна самăртма май парать.

Паллах ĕнтĕ, кукурузăсăр обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли апат çителĕклĕ хатĕрлеме, кашни 100 гектар çĕр пуçне 260—300 центнер сĕт, 27—30 центнер аш-какай, акăнакан кашни 100 гектар çĕр пуçне 30—50 центнер сысна ашĕ туса илме май çук.

Кукуруза тĕштырă туса илессине ÿстермелли тата обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли апат туса илмелли хăватлă резерв пулнине шута илсе, пирĕн колхозниксем 1956 çулта ăна 250 гектар: 180 гектарне кукуруза тĕшши туса илме, пысăк пахалăхлă силос хывма тата 70 гектарне симĕс конвейер тума акма йышăнчĕç. Эпир акнă пĕтĕм лаптăкран 100—150-шар центнер кукуруза пуçĕ тата 800—1.000-шер центнер симĕс масса туса илессишĕн кĕрешетпĕр. Çакăн чухлĕ тухăç пĕр ялхуçалăх культури те пама пултараймасть.

Пирĕн артель членĕсем Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XX-мĕш съездне çĕнĕ çитĕнÿсемпе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Колхоз 1956 çулта пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн тата обществăлла выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерессишĕн Чăваш АССР-ĕнчи ялхуçалăх ĕçченĕсен социализмла ăмăртăвне пуçарса ячĕ.

Колхозри уй-хир бригадисемпе выльăх-чĕрлĕх фермисенче хăйсем илнĕ обязательствăсене пурнăçлассишĕн кĕрешÿ вăйлăн сарăлса кайрĕ. Çав хĕрÿллĕ кунсенче колхозниксемпе механизаторсем вăрлăх сортлаççĕ, уй-хире вырăнти тата минераллă удобренисем кăлараççĕ; выльăх-чĕрлĕх патĕнче ĕçлекенсем ĕнесенчен нумайрах сĕт суса илессишĕн, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илессине ÿстерессишĕн тимлĕн кĕрешеççĕ.

Сыснасене самăртас ĕç

Кольцовка ялĕн сулахай енче, колхозăн хуçалăх центрĕ çывăхĕнче, сысна ферми вырнаçнă. Пысăк та вăрăм стандартлă сысна вити аякранах илемлĕн курăнса ларать. Унпа юнашар—сыснасене самăртма хупмалли çуллахи икĕ вите. Апат хатĕрлемелли механизациленĕ кормокухня та çакăнтах. Ферма таврашĕнче—таса та çутă общежити.

Фермăра ĕçлекенсен пурин те пĕр шухăш: сысна ферминчен илекен тупăша çулленех ÿстерсе пырасси. Эпир иртнĕ çул кашни сысна аминчен 18-шар çура илсе çитĕнтертĕмĕр. Малта пыракан свинаркăсен ÿсĕмĕ тата пысăкрах. Сăмахран, Екатерина Трошкина свинарка хăйне çирĕплетсе панă вунă амаран кашнинчен 20,3-шер çура илчĕ. Раиса Новикова хăй пăхакан вунă амаран 19,8-шер çура, Наталия Ванюхина—19,7-шер çура илнĕ.

Сысна амисен рационне кукуруза силосĕ кĕртни лайăх результат парать. Кашни амана кунне 5—6-шар килограмм силос паратпăр. Силоссăр пуçне амасене талăкра 4-шар килограмм çĕрулми, пĕрер килограмм концентратлă апат тата йĕтĕн арпине посыпкăна е комбикормпа хутăштарса тăрантаратпăр. Пĕтĕ амасене 1,5-шер килограмм концентратлă апат, 6-шар килограмм çĕрулми, 8-шар килограмм кукуруза силосĕ паратпăр. Çуллахи вăхăтра сыснасене ирĕкре тăрантаратпăр, кунсăр пуçне симĕс курăк çулса паратпăр.

Çурасене çăварланă хыççăнах самăртма хатĕрлетпĕр. Вĕсен йывăрăшĕ икĕ уйăх хушшинче 16—20-шер килограмран кая мар пулать. Пирĕн колхозри паллă свинаркăсем Е. Трошкина, В. Катанаева тата ыттисем те çурасен йывăрăшне амăшĕсенчен уйăрнă тĕле 20—25-шер килограма çитереççĕ. Свинаркăсем çамрăк çурасене пăхса çитĕнтерес ĕçе çапла йĕркеленĕ. Вăйлăрах çурасене сахалрах сĕтлĕ чĕчĕсем патне, начар çурасене лайăх çитĕннĕ тата сĕт нумай паракан чĕчĕсем патне яраççĕ. Çурасене малтанхи тăватă кун хушши ещĕксенче тытаççĕ. Чĕчĕ ĕмекен çурасене кашни сехетрех амăш сĕчĕпе тăрантараççĕ. Çурасене çакăн пек тăрантарасси çуралнă хыççăн виçĕ-тăватă кун хушши пырать. Пилĕк кун иртсен, вара вĕсене свинаркăсем ĕне сĕчĕпе тăрантарма хăнăхтараççĕ. Ăна çапла туса ирттереççĕ: станок çинĕ çатмапа ĕне сĕтне ăшăтса лартаççĕ, вара çурана ещĕкрен кăлараççĕ те çав станок патне яраççĕ. Ĕне сĕтне çиме хăнăхса çитсен, свинаркăсем çурасене ăшăланă урпа е сĕлĕ, çуртри çăнăхĕнчен тунă кĕсел параççĕ, унта 3—5-шер грамм тăвар тата пурă хутăштараççĕ. Пăтта сĕтпе хутăштарса параççĕ.

Эпир сыснасене концентратлă апатсем парассине вăраххăн ÿстерсе пыратпăр. Вунă кунхи çурасене 50—60-шар грамм концентратлă апат тата 100—150-шар грамм хăйăмне илмен сĕт паратпăр. Уйăх тултарсан, вăтам шутпа 300-шер грамм таран концентратлă апат паратпăр, 150-шар грамм сĕлĕпе урпа çăнăхĕнчен пĕçернĕ пăтăпа, 700-шер грамм уйранпа тăрантаратпăр, çавăн пекех вĕтетнĕ чĕрĕ кишĕр, кăшман тата кăштах утă çăнăхне пăспа пĕçерсе паратпăр.

Эпир самăртма çирĕп сывлăхлă, лайăх çитĕннĕ çурасене кăна суйласа илетпĕр. Çура мĕн чухлĕ лайăх çитĕннĕ, çавăн чухлĕ часрах самăрлать. Кашни амаран 6—8-шар çура самăртма уйăратпăр. Самăртма уйăрнă аçа çурасене çуралнă хыççăн ултă эрнерен кастаратпăр.

Икĕ уйăхран çурасене амăшĕсенчен уйăрса, вĕсене малалла пăхса çитĕнтерме уйрăм ушкăнсем тăватпăр.

Икĕ уйăхран пуçласа тăватă уйăха çити çурасене тĕштырăсене çĕрулмипе хутăштарса тата кукуруза силосĕ параççĕ. Кашни çурана вăтам шутпа талăкра 800 грамм концентратлă апат, 500 грамм çĕрулми, 800 грамм кукуруза силосĕ тата 1,5 килограмм уйран парса тăрантараççĕ.

Тăватă уйăхри çурасене вара самăртмалли кĕтĕве куçаратпăр. Çав вăхăтра кашни çура 50—60 килограмм таять. Ку вăхăтра çурасем хăвăрт ÿсеççĕ. Вĕсене эпир белок нумай тытакан апатсем: турантă, пăрçа йышши культурăсем, уйран çитеретпĕр.

Самăртма хупнă сыснасене ферма çывăхĕнчи участокра çÿретеççĕ. Унта ятарласа вика, сĕлĕ тата пăрçа акатпăр. Сыснасем симĕс апата питĕ юратса çиеççĕ. Çапла сыснасен виçшне талăкра 400 грамм е ытларах та хутшăнтарма урăх нимĕн те кирлĕ мар. Анчах кĕтÿре сыснасем часах ывăнаççĕ—шăрăха чăтаймаççĕ. Çавăнпа эпир вĕсем валли çирĕп кун йĕрки тăватпăр: ирхине 6 сехетрен пуçласа 10 сехетчен кĕтÿре çÿрететпĕр, 10 сехетрен пуçласа кăнтăрла иртсе 4 сехетчен кантаратпăр, 4 сехетрен пуçласа каçхине 8 сехетчен каллех кĕтÿре çÿрететпĕр. Кăнтăрлахи кану вăхăтĕнче тата каçхине кашни сыснана 2—4 килограмм симĕс клевер, 1—1,5 килограмм концентратлă апат, 2 килограмм кукуруза силосĕ, 2 килограмм çĕрулми паратпăр.

Сыснасем ултă уйăха çитсен, вĕсене тата ытларах апат парса тăрантарма тытăнатпăр: концентратлă апат, кукуруза силосĕ тата çĕрулми парассине уйрăмах ÿстеретпĕр.

Самăртнă чухне лайăх тăрантарни сыснасен чĕрĕ виçине хăвăрт ÿстерет. 2 уйăхран пуçласа 4 уйăхри сысна çурисем кашни талăкрах 380—400 грамм таран, 4 уйăхран пуçласа 6 уйăхри сысна çурисем—480—500 грамм таран хутшăнса пыраççĕ. 6 уйăхран пуçласа 8—9 уйăхри кашни сысна çурин чĕрĕ виçи вăтам шутпа кашни талăкра 550—570 грамм таран хутшăнать. Ун чухне вĕсем кашниех вăтам шутпа 100—120 килограмм таякан пулаççĕ, вĕсене малалла самăртмастпăр, государствăна паратпăр е сутатпăр.

Партин XX-мĕш съезчĕ ячĕпе социализмла ăмăртăва хутшăнса, пирĕн ферма коллективĕ акăнакан çĕрсен кашни 100 гектарĕ пуçне 50 центнер сысна ашĕ илме, сысна ашне пĕтĕмпех государствăна пама тата сутма обязательствăсем илчĕ.

Çак обязательствăсене пурнăçлама пирĕн условисем çителĕклĕ. Сысна витисене тата кормоцеха хĕле лайăх хатĕрлесе çитернĕ. Хĕллехи вăхăтра тăрантарма кашни ÿссе çитнĕ сысна валли 3 центнер таран концентратлă апат, 2 тонна ытла кукуруза силосĕ, 1,5 центнер таран клевер ути тата 3 центнер çĕрулми хатĕрленĕ.

Иртнĕ çултан пуçласа пирĕн колхоз сысна самăртассине çулталăк тăршшĕпех туса пыма тытăнать. Сыснасене малашне çулла та, кĕркунне те, хĕлле те самăртатпăр. Халĕ пирĕн фермăра 110 сысна самăртма хупнă. Эпир вĕсене май уйăхĕ тĕлне самăртса государствăна паратпăр. 1956 çулта кĕркуннехи çурасене 200 пуç, çуркуннехи çурасене 500 пуç самăртатпăр.

П. ПУПИН.
Сысна ферми заведующийĕ,
Социализмла Ĕç Геройĕ.

Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри малта пыракан доярккăсемпе свинаркăсем (сулахайран сылтăмалла): К. А. Ситукина, А. Н. Оленева, В. С. Катанаева, Н. А. Ванюхина, З. А. Нивикова, А. Н. Талаева, П. П. Першуткина, А. П. Чигитова, М. Т. Палагина юлташсем.

Г. Зиньков фотоÿкерчĕкĕсем.

Совет делегацийĕ Демократиллĕ Германи Республикин Президенчĕ Вильгельм Пик 80 çул тултарнине уявланă çĕрте пулма Берлина тухса кайнă

Январĕн 1-мĕшĕнче Мускавран Берлина совет делегацийĕ тухса кайнă. Делегаци Демократиллĕ Германи Республикин Президенчĕ Вильгельм Пик 80 çул тултарнине уявланă çĕрте пулать. Делегацие СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. Е. Ворошилов ертсе пырать.

Делегаци составĕнче: П. Н. Поспелов, О. В. Куусинен, Е. Д. Стасова, Г. М. Пушкин. (ТАСС).

ХУРА МЕТАЛЛУРГИ РАБОТНИКĔСЕМ ХУРÇАПА ПРОКАТ ТУСА КĂЛАРМАЛЛИ ТАТА ТИМĔР ТĂПРИ КĂЛАРМАЛЛИ ПЛАНА СРОКЧЕН ТУЛТАРНĂ

Хура металлурги работникĕсем 1955 çулта хурçă шăратмалли тата тимĕр тăпри кăлармалли плана срокчен, декабрĕн 26-мĕшĕнче, прокат туса кăлармалли плана—декабрĕн 30-мĕшĕнче тултарнă.

ТĔСЛĔ МЕТАЛЛУРГИ РАБОТНИКĔСЕМ ÇУЛТАЛĂКРИ ПЛАНА СРОКЧЕН ТУЛТАРНĂ

Тĕслĕ металлурги работникĕсем 1955 çул валли палăртнă плана валовой продукци енĕпе тата нумай йышши тĕслĕ металсем енĕпе, çав шутра алюмини, пăхăр, тăхлан, цинк, хура тăхлан тата магни туса кăлармалли плана срокчен тултарнă.

Улан-Баторпа Пекин хушшинчи чугун çул тăрăх поездсем çӳреме пуçланă

УЛАН-БАТОР, январĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Совет Союзĕнчен Улан-Батора пынă пĕрремĕш поезд декабрĕн 31-мĕшĕнче çав хуларан Пекина тухса кайнă. Улан-Баторпа Дзамын-Удэ хушшинчи чугун çул тăрăх поездсем çӳреме пуçланă тата ССР Союзĕпе Китай Халăх Республики хушшинче Монголи Халăх Республики урлă тӳрремĕнех поездсем çӳремелли çула уçнă ятпа савăнăçлă митинг ирттернĕ. Унта Улан-Баторт ĕçсыннисем нумай пухăннă, пĕтĕмпе 30 пин çын пулнă.

Митингра Монголи Халăх Республикин премьер-министрĕ Ю. Цеденбал саламлă сăмах каланă.

СССР Правительстви ячĕпе, митинга пухăннисене чугун çула ăнăçлăн туса пĕтернĕ тата эксплуатацилеме тытăннă май совет делегацийĕн пуçлăхĕ, çул-йĕр министрĕ Б. П. Бещев саламланă. Китай Халăх Республики делегацийĕн пуçлăхĕ Тэн Дай-юань саламлă сăмах каланă.

Монголи урлă каякан вăрăм чугун çул

Телеграф савăнăçлă хыпар илсе килчĕ: 1956 çула кĕрес умĕнхи кун Монголи урлă каякан вăрăм чугун çул ĕçлеме тытăннă. Çак çул Совет Союзне, Монголи Халăх Республикине тата Китай Халăх Республикине çыхăнтарать, вĕсем хушшинче тӳрремĕнех çӳремелли чи кĕске çул пулса тăрать. Çĕнĕ чугун çул виçĕ тăванла çĕршыв хушшинчи туслă çыхăнусене малалла тĕреклетсе пыма, вĕсем хушшинчи экономикăлла тата культурăлла çыхăнусене çирĕплетме пулăшать.

Транспорт строительствин министерствинче ТАСС корреспондентне çапла каласа панă:

Халиччен ССР Союзĕпе Китай столицисене Отпор станцийĕ тата Маньчжури урлă каякан чугун çул çыхăнтарса тăнă. Улан-Батор урлă каякан çĕнĕ чугун çул Мускавран Пекина каймалли çул тăршшĕне 1.100 километр чухлĕ чакарать. Темиçе çул каялла совет чиккинчи Наушки станцийĕнчен Улан-Батора çитиччен чугун çул хывнă пулнă. Çав çула тума совет строительсем пулăшнă. Халĕ çак чугун çул Монголипе Китай хушшинчи чикĕри Дзамын-Удэ станцийĕ патне çитет те малалла Китай территорийĕ тăрăх каять. Улан-Батор хулинчен Монголипе Китай чиккине çитиччен каякан çул 713 километр тăршшĕ. Çак участока Совет Союзĕпе Монголи строительсем, Эрлянь станцийĕнчен Цзиннин хулине çитиччен каякан çула Китай строительсем тунă.

Чугун çул тăвакансен нумай йывăрлăхсене çĕнтерме тивнĕ. Çапла, сăмахран, совет чугун çул работникĕсем шывсăр вырăнта, Гоби пушхирĕнче 400 километр тăршшĕ хурçă çул хывнă.

Ĕçсене индустриллĕ меслетпе туса пынă, совет çĕршывĕн хăвататлă техникипе усă курнă, строительсен пĕтĕм вăя хурса ĕçленĕ. Çавна май Улан-Баторпа Дзамын-Удэне çитиччен каякан 700 километр ытла çула икĕ çул хушшинче туса пĕтернĕ. Кĕперсем, депо, вокзалсем тунă çĕрте сборлă тимĕрбетонпа анлăн усă курнă. Пушхирте чугун çул работникĕсен поселокĕсем пулса тăнă. Поселоксене электричество çутатать. Вĕсенче водопровод пур.

Монголи урлă каякан вăрăм чугун çул тăрăх поездсене тепловозсем кăна илсе çӳрессĕ.

СССР—Монголи—Китай чугун çул магистралĕ вăл Совет Союзĕпе Монголипе Китайăн чугун çул работникĕсен—строительсен [illegible] 1956 çул [illegible]. (ТАСС).

Хĕл ларсан

ОЧЕРК

Павел Тимофеевич Карсаков вĕри çатма çинче икерчĕ çатăртатнă сасса илтсе вăранчĕ. Вăрансанах вăл пĕр кана ним хускалмасăр выртрĕ. Тĕттĕм-кăвак сатинран çĕленĕ мамăк утиял ăшĕнче ăшă та канлĕ. Те ĕнер касна мунча кĕрсе тасалнăран, те çĕр касиччен пĕр вăранмасăр çывăрнăран, ӳт-пӳ те çăмăлланнăн туйăнать. Пăртак выртсан сăмсипе пăшлаттарса туртса пăхрĕ: пӳртре, чăнах та, çуллă икерчĕ шăрши кĕрет.

Халиччен ăна арăмĕ хăйпе пĕрлех тăрататчĕ. Павел Тимофеевич апат çимесĕрех, вăрăм чăпăркка патакне илсе, ферма еннелле утаканччĕ. Фермăра ăна вĕрлĕк хушшинчен пуçĕсене кăларнă сурăхсем кĕтсе тăраканччĕ. Вăл карта алăкне яр! уçса ярса миçе сурăх тухнине шутлатчĕ. Картаран тухсан та сурăхсем, пĕр çĕре пуçтарăнса, кĕтӳçĕ еннелле пăхса тăраканччĕ. Павел Тимофеевич шик! шăхăрса илет те, ерипен кăна ферма çумĕнчен пуçланакан çерем утать. Ун хыççăн сурăхсем умлă-хыçлă шăкăртаттарса утса пыраççĕ. Курăк аван вырăна çитсен вăл патак çине тайăнса тăрса чуна çĕклентерекен кĕвĕсем шăратма тытăнать. Сурăхсем йĕри-тавра сарăлса кайса пурçăн пек çемçе те *сĕтеклĕ етĕл курăка хыпашлаççĕ*. Вăл кĕтӳ çӳретме уйăрса панă вырăна темиçе лаптăка уйăрнă. Кашни лаптăк çинче ик-виçĕ кунран ытла çитермест. Пĕр лаптăкри курăка çитерсе пĕтернĕ çĕре тепĕр вырăна куçать. Арăмне вăл кашни кунах паян хăш лаптăк çинче çитерессине пĕлтерсе хăвараканччĕ. Хĕвел тухса сарăлса çĕр кăкăрне ăшăтнă вăхăтра арăмĕ ун патне çуллă пăтă е шурă çăнăх чустинчен каснă салма шӳрпи илсе пыраканччĕ.

...Пӳрт ăшчикне ачаш кăна шупка шурă сăн çапнă. Тулта лăпкă тăман çăвать. Хутран-ситрен çил çерçи пуçĕ пек юр пĕрчисене вĕлтĕртеттерсе лупашкасемпе шăтăк-шăкăрсене çаврса кĕртет.

Кĕр мăнтăрĕ шурă юрпа хупланать. Нумай вăхăтлăха хĕл ларать.

Павел Тимофеевич хăйне арăмĕ мĕншĕн вăратманнине тавçăрса илчĕ. Кĕтӳ каяс кунсем иртрĕç-мĕн. Çавăнпа арăмĕ унăн тутлă ыйăхне татасшăн пулман иккен.

— Ăçта кайма васкатăн эсĕ?—ыйтрĕ арăмĕ упăшки вырăн çинчен тăрса тумланса тухса кайма хатĕрленнине курсан.

— Фермăна.

— Апат çимесĕр ан çӳре ĕнтĕ.

— Кайран... Эпĕ йăпăрт кăна кайса килетĕп,— арăмне апат антарма чарасшăн пулчĕ вăл.

— Çуркуннерене иксĕмĕр пĕр сĕтел хушшине ларса апат çимен... Килтен писнĕ çын пек хăтланатăн... Кăшт кăна тăхта ĕнтĕ,— ӳпкелешнĕ пек пулса ӳкĕтлерĕ арăмĕ.

— Апат вăл, амăшĕ, кăшкăр мар,— тармасть. Кайран та ĕлкĕрет.

— И-и-и! Пĕлетĕп эпĕ сана. Пĕр килтен тухса кайсан фермăран хăваласа та килме çук... Фермăри сурăхсем ниçта та тармаççĕ вĕсем... Эпĕ пур, паян кĕтӳ каймасть-ха, тесе юри кульмак пĕçертĕм,— малтанхи пекех кӳренсе йăнкăртатрĕ Ксени.

— Вăт пуçларĕ те... Çук çĕртен павраma сăмах тупать,— Павăл та юри çиленнĕ пек туса калаçма пуçларĕ. Калаçнă хушăра хăй сĕтел хушшине кĕрсе ларчĕ.

— Ара, пăх-ха, эсĕ... Пĕçерпĕ апата вĕрилле çимесĕр тухса каясшăн,—такама каласа кăтартнă пек сăмахларĕ Ксени. Вара хăй те сĕтел хушшине упăшкине хирĕç ларчĕ. Тӳпелесе хунă турилкке çинчен пĕр кульмакне илсе тутанса пăхрĕ. Унтан каллех вĕтеленсе çӳресе пӳрт ăшчикĕнчи ĕçсене тума пуçларĕ.

— Су касиччен ачасене пăхнă пек пăхрăм эпĕ вĕсене. Имшертереххисене курăк вăйлăрах вырăна ярса çитереттĕм. Пурте лайăх тĕселсе хĕле кĕчĕç. Çăвĕпе пĕр чун та чакмарĕ. Сивĕ çăмăрсенче шăнсан çири тумтирпе чĕркесе ăшăтни те пайтах пулнă... Кĕтӳре лайăх çӳретрĕм... Кĕтĕве кайман чухне темле пăхĕç ĕнтĕ.

— Ара, çи халĕ эсĕ, çи,—аллине тытнă кульмакне çиме манса хăй тĕллĕн сăмахласа ларакан упăшкине каларĕ Ксени.—Ку тарана çитерсе панă. Малашне сансăрах пăхĕç-ха ĕнтĕ.

— Сынсем тĕрлĕ пулаççĕ. Пурне те шанса пĕтерме çук вĕсене, çамрăксене. Пĕри пăхма пĕлмест. Тепри ĕçлеме ӳркенет. Шан-ха вĕсене...

Карсаков фермăра выçăпа касăхнă сурăхсем çĕр çĕмĕрес пек макăрса тăрассĕ пулĕ, тесе пăшăрханнăччĕ. Çуллен, выçă тăма мар, пылчăк çумне шăнса çыпăçнă сурăхсем кунĕ-кунĕпе тăраймасăр выртни те пулкаланă. Вĕсене çĕр çумĕнчен хăчăпа касса тăрататчĕç. Шăнса чулланнă урайне кĕççе пек çăм çыпăçса юлатчĕ. Çавăнпа ăш вырттмарĕ унăн: Вырăн çинчен тăнă-тăманах васкаса фермăна кайса килесшĕн пулчĕ.

Фермăра вăл пур кĕтессене те кĕрсе пăхма пуçларĕ. Çук, кăçал йĕрке пĕрре те иртнĕ çулсенчи пек мар иккен. Стенасене лайăх мăкланă хыççăн икĕ енчен те тăмпа шăлса питĕрнĕ. Кантăксăр чӳречесем те курăнмаççĕ. Çĕнĕрен витнĕ çивитти витĕр те шыв анас çук. Урайне сап-сарă та тип-типĕ ыраш улăмĕ сарнă. Сурăхсем пуçĕсене çĕклемесĕр сĕлĕ улăмĕпе хутăштарнă вика утине кăмпăр-кăмпăрт тутарса çиеççĕ.

— Ульха, хăçан турттарма ĕлкĕртĕр?—ыйтрĕ сурăх пăхакан хĕрачаран Карсаков.

— Мĕне вăл, Павăл тете?

— Улăм çинчен ыйтатăп-çке.

— Е-с-е улăма-и? Ăна хĕл ларасса кĕтсе тăхçанах вите тĕррине антарса хунă. Эпĕ кунĕ-кунĕпе хирте çӳренине ним пĕлмесĕр пурăнатăп... Капла кăçал сире те çăмăл, сурăхсем те тутă пулаççĕ.

Вăл сурăхсене пăранлаттармалли пӳлĕме кĕчĕ. Пӳлĕм стени çумне кормушка туса лартнă. «Вăт капла апат перекечĕ вĕçмест»—шухăшла кайса пăхса тăчĕ Карсаков.

— Витере виçĕ пӳлĕм туса пĕтĕмпех çакăн пек кормушкăсем лартасшăнччĕ. Çук вĕт, хăма çитмерĕ. Кашни çыннăн харпăр хăйĕн сурăхне пăхмалла пулатчĕ вара...

— Ульха, ăçта эсĕ?—запарник енчен илтĕнчĕ Валя сасси.

— Кунта!—витерен чупса тухрĕ Ульха.

— Шыв ăшăтса хутăм. Шăварма пуçлатпăр!—пĕлтерчĕ Валя.

Ульха сурăхсене пĕчĕк-пĕчĕк ушкăнпа кăларса тăчĕ. Валя ăшă шыв çĕклесе шăварма пуçларĕ.

Карсаков хĕрачасенчен пурне те тĕпчесе пĕлесшĕн. Кăçал колхоз сурăхсем валли улăм, пусыпке тума тĕштырă, кукурузăран хывнă паха силос нумай уйăрнă. Ирхине сурăхсене ăшă шыв çинче çăнăх юрса параççĕ. Ăшă шыв çине пăртак тăвар та яраççĕ. Касăпа ĕçтерме мязгаллă шыв хатĕрлесшĕн. Ĕнесемпе сурăхсене çитерме цементран тунă траншея тулли мязга тултарса хунă.

Ĕлĕкхи çулсенче, колхоз правленийĕн ларăвĕ пулсан, выльăх вилни çинчен çырнă актсене пăхса тухатчĕç.

— Мĕн чирпе вилнĕ?—вулама пуçличченех ыйтатчĕç правлени членĕсем.

— Ӳпке шыçнипе,—ветврач справкине вĕçне кăна пăхса ответлетчĕ счетовод.

— Списать! — кăшкăратчĕç ларури çынсем.

Ветеринарсем начах килме пăрахрĕç колхоза. «Сирĕн унта сивĕрен пуçне урăх чир çук» тетчĕç. Кирек мĕн чирпе вилес пулсан та «ӳпке шыçнипе» тесе справка çырса паратчĕç.

Запарнике лартнăранпа «ӳпке шыçнă» сăмаха манма пуçларĕç. «Списать» тени те илтĕнсех каймасть.

Путексем хупмалли вите лартиччен мĕн курттăмăр тата? Путексенчен çурри картарах шăнса вилнĕ. «Йышлă сурăха пĕр çĕрте усрама юрамасть. Пĕр-пĕрипе тĕкĕшсе путек пăрахаççĕ», тетчĕç вара. Кĕтӳре чипер çӳрекенсем витере мĕншĕн раснах тĕкĕшмелле-ха вĕсем? Ултавçăсем! Хăйсен айăпне сурăх çине йăвантарасшăн! Янавар пĕлмест, тесçĕ пулать ĕнтĕ. Пĕлтĕр путек вити хута кайсан, пăранламалли сурăхсене унта хупма пуçларăмăр та, «тĕкĕшме пăрахрĕç». Висĕмçул çĕр хĕрĕх сурăхран вунвиç путек илсе ӳстертĕмĕр. Ĕçлени мар, тĕп туни вĕт вăл... Пĕлтĕр те путек вити каярах юлса ĕлкĕрчĕ те, путексем çуррине яхăн пĕтрĕç. Кăçал ун пек ан пултăрччĕ ĕнтĕ...

Çапла шухăшларĕ путек витине тиркекен кусĕпе пăхакан Карсаков. Анчах вăл тиркемелли сăлтавсем тупаймарĕ. Тул енчен вите йĕри-тавра тăпра купаласа çаврăннă. Пĕрене хушшисене тăмпа шăлса питĕрнĕ. Ун витĕр темле ахăрса тулашакан çил те кĕрейрес çук. Икшер хут чӳрече лартнă. Çулла, тем амака пула, мăрьесем ишĕлнĕччĕ. Халĕ икĕ кăмакана та лайăх юсанă-мĕн. Сурăхсем пăранлас-тăвас пулсан паянах хутса ăшăтма пулать.

Тулта çантăлăк алхаснă çемĕн алхасрĕ. Урнă пек ахăрса тăракан çил çӳлтен анакан юра çĕр çумĕне шăлса тусанпа хутăштарать те, çырмасенпе варсене хăваласа каять.

Вите алăкĕ аçа çапнă пек шартлатса хупăнчĕ. Алăк патĕнчи пысăк така каялла сиксе ӳкрĕ те çиле май хирелле вĕçтерчĕ. Ун хыççăн ытти сурăхсем те шуйланса чупрĕç. Сурăх пăхакан хĕрачасем кĕтĕве темиçе хут та пӳле-пӳле илчĕç. Хăлаçлана-хăлаçлана кăшкăрса сурăхсене каялла çаврасшăн пулчĕç. Çук, ĕç кăлараймарĕç. Така хĕрачасен хушшинчен вĕлт! кăна тухса сирпĕнет. Ун хыççăн ытти сурăхсем те çапăнса ӳкес пек чупаççĕ.

Ниш тума аптăранă хĕрачасем йĕре-йĕре каялла таврăннине курсан, Павел Тимофеевич пĕр ывăç улăм илчĕ те, кĕтӳ хыççăн чупрĕ. Чупнă çĕртех, сулахай аллине малалла тăсса, такана йыхăрчĕ. Йыхăрнă сасса илтсен така чупма чарăнчĕ. Ăна курса ытти сурăхсем ĕрĕхми пулчĕç. Пăртакран Карсаков кĕтӳ умне пырса тăчĕ. Шурă така пуçне тăратса ун патне утса пычĕ. Кĕтӳç ăна сулахай аллипе айĕнчен хыçнă пек туса ачашларĕ. Кĕтӳ чарăнса лăпланчĕ. Карсаков кĕтĕве малтан улăм çитерчĕ, çиле май ертсе кайрĕ. Вара орипен кăна пăрăнса çиле урлă утрĕ. Юлашкинчен,çиле хирĕç çаврăнса, фермăна ертсе килчĕ.

Хĕпĕртенĕ хĕрачасем ăна тем тĕрлĕ ырă сăмахсем каласа тав турĕç. Хăçан та пулсан хăйне те ырă ĕç туса пулăшмалăх пулчĕç.

— Ӳлĕмрен патакпа çапса е кăшкăрса ан хăратăр. Выльăх вăл ачашланине юратать,—сурăхсене витене кĕртсе пĕтерсен хĕрачасене ăс пачĕ Карсаков.

— Сапа хăнăхнă çав вĕсем,—кĕтĕве чарайманшăн намăсланчĕç хĕрачасем.

— Эсир те яшпар пăхса хăвăра илентерĕр.

— Халĕ те илентерме тăрăшатпăр та...

— Тăрăшни кăна сахал, мелне те пĕлес пулать.

Курса çӳренĕçемĕн Карсаковăн вăркаса тăракан чунĕ пусăрăнса пычĕ. Фермăран вăл тӳрех колхоз правленине утрĕ.

Правленире ĕлĕкхи пек чикарккă турт ма пухăнса лараканесем çук. Çынсем пыраççĕ те, хăйсене мĕн кирлине ыйтса пĕлсен, тухса каяççĕ.

— Мĕн çăмăлпа çӳретĕр, Павел Тимофеевич?—сума суса ларма сĕнчĕ ăна председатель.

— Кĕтӳ кайма чарăнчĕ вăн...—тăруках ним хуравлама пĕлмерĕ Карсаков.— Пушă чухне ĕçкунĕсене шутлаттарса пăхас терĕм.

Председатель Карсаков мĕн те пулсан калас шухăшпа килнине сисрĕ, анчах ăна палăртмарĕ. «Пиçмесĕр татнă çимĕç йӳçĕ пулакан. Йӳçсе çаврăнсан хăйех каласа парĕ»,—шухăшларĕ председатель хăйĕн ăшĕнче. Çавăнпа вăл Карсаков пуçланă сăмах йĕрĕнчен пăрăнмарĕ.

— Шутлаттар-ха, шутлаттар. Пирĕн, колхозниксен, шалăвĕ çавă... Шутлаттарас пулать. Сана хăвна пĕр çĕр утмăл пăт ытларах тухать пулас-ха унта,—Карсаков çумне пырса ларчĕ пилĕк ыратнипе алăкăн-тĕпелĕн утсаласа çӳрекен председатель.

— Апла çемйипе иксĕр пăтран иртеретпĕр.

— Ирттеретĕр пулмасăр... Укçа та сахал мар.

— Кăçал ĕçлекен çыншăн пуймалли çул килчĕ...—те председатель сума сунăран, те тырă нумай лекнĕшĕн савăннăран, кăмăлĕ уçăлчĕ Карсаковăн.

— Хĕлле мĕн ĕç туса пурăнма уйлатăрха, Павел Тимофеевич?—Карсакова тапак хутаççи сĕнсе май ыйтрĕ председатель.

— Хам та çав юрăпах килнĕччĕ-ха,—правленире туртма юраманнине аса илчĕ пулсан та, паракан хутаçса илсе чикарккă чĕркесе ячĕ вăл.—Пĕлтĕрхи пек, каллех фермăра ĕçлеме тытăнмалла мар-ши тетĕп.

— Апла питĕ аван... Эпир ферма заведующийĕпе калаçса пăхнăччĕ. Вăл сана путек пăхма сĕнесшĕн.

— Апла иккен...

— Сан пек шанăçлă çын кирлĕ унта. Вара путексене пĕлтĕрхи пек сая ярса пĕтерместĕмĕр.

— Манпа пĕрле шухăшланă пекех каларăр иккен эсир. Эпĕ хам та путексем пăхма кĕресшĕнччĕ çав...

— Тĕрĕс тăватăн эсĕ, Павел Тимофеевич. Кăçалтан сурăх ĕрчетес енĕпе те тăкăлă ушăну тăвасчĕ колхозра.

— Ара, хĕл хута килте мĕн туса выртас-ха...

Павел ЩИПЦОВ.

«Смычка» колхоз, Елчĕк районĕ

Пысăк обязательство йышăнтăм

Вăрмар машина-трактор станцийĕнче эпĕ çирĕммĕш çул ĕçлетĕп. Çак вăхăт хушшинче манăн ĕçре йывăрлăхсем сахал мар тĕл пулнă. Хăшпĕр çулсенче трактор тумалли çултăлăкри ĕçсен планне [illegible] тултараймастăмччĕ, тепĕр чухне [illegible] аран-аран тултаттăм, анчах горючие [illegible] перекетлеймен [illegible].

Юлашки çулсенче эпĕ хамăн квалификацие ӳстерме уйрăмах хытă тăрăшрăм. Районти тата республикăри машина-трактор станцийĕсенчи малта пыракан механизаторсен ĕç опычĕсене вĕрентĕм, хамăн ДТ-54 трактора техника енчен лайăх пĕлме тăрăшрăм. Çавсем мана ĕçре тĕрлĕ [illegible] лайăхлатма, [illegible] пулăшрĕç.

Кăçалхи çĕнĕ çула эпĕ [illegible] хавасланса кĕтсе илтĕм. Трактора тумалли ĕçсен планне 130 процент ытла туса тултартăм, 853 гектар вырăнне 1.185 гектар сухалани [illegible] турăм.

1955 çулта пирĕн бригада «Свобода» колхоза ĕçлерĕ. Колхозниксемпе тачă çыхăнса, уй-хир ĕçĕсене эпир агротехника [illegible] пĕтĕм вăя хутăмăр. [illegible] вăхăтра ирттертĕмĕр, кĕрхи тата хура сухана [illegible] сухаласа хăвартăмăр. «Свобода» артель членĕсем 1955 çулта пĕтĕм [illegible] тухăçлăх илчĕç. Кашни гектартан [illegible] тĕштырă илчĕç. [illegible] Малта пыракан бригадăсен ĕç опычĕ [illegible]. Анчах эпир çав резервсене [illegible] усă курайман [illegible].

Механизаторсен ĕçне партипе правительство пысăка хурса хаклаççĕ. Эпир çакна кулленех туятпăр. 1955 çулта, акă, эпĕ 635 ĕçкунĕ турăм. Çав ĕçкунĕсемшĕн пуçне 120 пăт тĕштырă, 4.445 тенкĕ укçа илтĕм.

Çĕнĕ çулта эпĕ тата пысăкрах обязательство йышăнтăм, пурĕ 1.200 гектар сухалама [illegible] тата горючи чылай перекетлеме сăмах патăм.

Хальхи вăхăтра пирĕн МТС мастерскойĕнче тракторсем юсаса çĕрте ĕçлетĕп. Пирĕн МТС коллективĕ КПСС ХХ-мĕш съездне [illegible] юсаса [illegible] 70 трактор [illegible]. Çак обязательствăна чысăн пурнăçлама эпир пĕтĕм вăй-хала хуратпăр, [illegible] тăрăшатпăр.

А. ПЕТРОВ.
Тракторист.

Л. С. СПАСОВ

Нумай вăхăт хушши йывăр чирлесе выртнă хыççăн 1956 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче Лука Семенович Спасов вилсе кайрĕ. Вăл 1918 çултанпа КПСС членĕнче тăнă, отставкăри полковник пулнă.

Л. С. Спасов юлташ вилчĕ, парти Чăваш область организацийĕ республикăн ертсе пыракан активлă работникĕсенчен пĕрне çухатрĕ.

Л. С. Спасов 1899 çулта Етĕрне уесĕнчи Упи вулăсĕнче Вăтам Тракра, хальхи Чăваш АССРĕнчи, Красноармейски районĕнчи Диповкăра çуралнă. Вăл малтан 1914 çултан пуçласа Упи вулăсĕн правленийĕнче переписчик пулса ĕçленĕ. 1919 çултан пуçласа 1926 çулччен Спасов юлташ Совет Çарĕнче пулнă. Унта вăл малтанхи çулсенче рядовой салтак, каярахпа—полк комиссарĕ пулнă. Çартан таврăннă хыççăн 1941 çулччен Л. С. Спасов юлташ ертсе пыракан вырăнсенче ĕçленĕ. Вăл КПСС Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ, Чăваш АССР Çĕрĕç халăх комиссарĕ, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ пулнă. Спасов юлташ Горький крайисполкомĕн председателĕн заместителĕ пулса 5 çул ĕçленĕ. 1937 çулта парти органĕсем йышăннă тăрăх вăл Чăваш республикине таврăннă та тепĕр хут Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ пулса ĕçленĕ.

1941 çулта Лука Семенович Спасов хăйĕн ирĕкĕпе Совет Çарне, фронта тухса кайнă. Вăл малтан Хĕвеланăç фронтра полк комиссарĕ пулса вăрçăра çапăçнă, унтан кайран тĕрлĕ командăлăх должноçсенче пулнă. Спасов юлташа полковник ятне панă. Вăл чирленипе 1948 çулта отставкăна тухнă. Çав çулах ăна Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи Строительство материалĕсен промышленноçĕн управленийĕн начальникĕ пулма уйăрса лартнă, çак ĕçре вăл чирлесе пекен çине тухиччен ĕçленĕ.

Партипе совет органĕсенче тата Совет Çарĕнче ĕçленĕ çулсенче Лука Семенович Спасов Совет çĕршывĕн хĕрӳллĕ патриочĕ, тĕплĕн шухăшласа пултаруллă ĕçлекен работник пулнине палăрнă. Вăл хăйне шаннă пур ĕçе те пысăк хастарлăхпа тата пултаруллăн туса пынă. Республика ĕçсыннисем вăл сăпайлă, çирĕп ирĕклĕ, активлă ертсе пыракан работник пулнине, чăваш халăхĕн чи лайăх ывăлĕсенчен пĕри пулнине пĕлеççĕ.

Спасов юлташа СССР Центральнăй Исполнительнăй Комитечĕн членне виçĕ хутчен суйланă. Вăл СССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ те, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ те пулнă. Лука Семенович Спасова темиçе хутчен партин Чăваш обкомĕн тата Горький крайкомĕн членне суйланă.

Совет правительстви Спасов юлташăн тава тивĕçлĕ ĕçне пысăка хурса хакланă. Ăна ССР Союзĕн орденĕсем—«Отечественнăй вăрçă» орденĕсем виççĕ, «Хĕрлĕ çăлтăр» орденĕ тата пилĕк медаль парса наградăланă.

Партипе советсен республикăри активлă работникне, пирĕн Тăван çĕршывăн тата Коммунистсен партийĕн шанчăклă ывăлĕн ятне эпир нумай вăхăт хушши хамăр чĕресенче упрăпăр.

С. М. Ислюков, М. Д. Корабельников, А. С. Ерлаков, Д. Я. Митьков, Н. Н. Никитин, В. Я. Яковлев, П. А. Чичинин, М. М. Романова, Л. Х. Михайлов, М. А. Андреев, М. В. Зайцев, П. Т. Трофимов, А. А. Сысин, М. Н. Янимов, А. И. Иванов, А. И. Измайлов, И. П. Старухин, Н. П. Енчиков тата ыттисем те.

Комиссирен

Л. С. Спасова пытарас тĕлĕшпе ĕçлекен комисси çапла пĕлтерет: Л. С. Спасов ӳтне хунă тупăка КПСС Шупашкар хула комитечĕн библиотекин Пысăк залне (Урицки урамĕ) вырнаçтарнă, унта январĕн 3-мĕшĕнче 11 сехетрен пуçласа 19 сехетчен тата январĕн 4-мĕшĕнче 10 сехетрен пуçласа 12 сехетчен кĕртессĕ.

Л. С. Спасова январĕн 4-мĕшĕнче 12 сехетре пытарассĕ.

Редактор М. Н. ЯКИМОВ.

СССР халăх хуçалăхне аталантармалли государство заемĕ

(1952 çулхи кăларăм)

6-мĕш выляvра тухнă облигацисене тĕрĕслемелли

ТАБЛИЦА

Выляв тиражĕ 1955 çулхи декабрĕн 25-мĕшĕнче Чимкент хулинче пулнă.

Заемăн мĕнпур разрячĕсенчи серисемпе облигацисен çак номерĕсем çине выигрыш тухнă:

Серн №№	Облигаци №№	Мире тенкĕ	Серн №№	Облигаци №№	Мире тенкĕ	Серн №№	Облигаци №№	Мире тенкĕ
120134	29*)	1.000	126110	1—50	200	132449	33*)	1.000
120147	17*)	1.000	126179	31*)	1.000	132760	1—50	500
120154	42*)	1.000	126325	1—50	500	132892	37*)	1.000
120216	1—50	200	126336	42*)	1.000	132938	47*)	1.000
120385	07*)	1.000	126585	26*)	1.000	132944	15*)	1.000
120489	39*)	1.000	127111	22*)	1.000	133043	37*)	1.000
120537	1—50	500	127158	48*)	1.000	133141	35*)	1.000
120766	22*)	1.000	127330	27*)	1.000	133171	1—50	500
120806	31*)	1.000	127483	30*)	25.000	133258	42*)	1.000
120849	32*)	1.000	127655	03*)	1.000	133286	49*)	1.000
120916	37*)	1.000	127712	37*)	5.000	133540	16*)	1.000
121138	1—50	200	127955	17*)	1.000	133611	31*)	1.000
121146	1—50	500	127968	48*)	1.000	133649	20*)	1.000
121159	35*)	1.000	127994	1—50	500	133904	33*)	10.000
121321	1—50	500	128056	1—50	200	133930	16*)	1.000
121626	25*)	1.000	128097	45*)	1.000	134059	1—50	200
121833	1—50	200	128186	28*)	5.000	134063	15*)	1.000
121846	11*)	1.000	128406	35*)	1.000	134279	38*)	1.000
121990	1—50	200	128487	26*)	1.000	134523	1—50	200
122167	06*)	1.000	128654	05*)	1.000	134553	05*)	1.000
122629	1—50	200	128881	1—50	500	135043	1—50	200
122636	1—50	500	128902	24*)	1.000	135159	14*)	1.000
122637	1—50	200	128909	1—50	200	135267	1—50	200
122715	35*)	1.000	129083	39*)	1.000	135399	1—50	500
122862	33*)	5.000	129144	11*)	1.000	135790	41*)	1.000
122866	1—50	500	129194	1—50	200	135973	1—50	200
122989	1—50	200	129274	19*)	10.000	136139	45*)	1.000
123226	35*)	1.000	129354	1—50	200	136395	1—50	200
123327	1—50	200	129368	1—50	200	136459	1—50	500
123331	20*)	1.000	129583	02*)	1.000	136539	28*)	1.000
123439	01*)	1.000	129590	50*)	1.000	136597	04*)	1.000
123553	31*)	1.000	129600	13*)	1.000	136646	1—50	200
123743	30*)	1.000	129820	34*)	1.000	136869	1—50	200
123824	10*)	5.000	129879	40*)	1.000	137418	1—50	200
123882	45*)	1.000	129964	01*)	1.000	137547	05*)	1.000
123988	30*)	1.000	130076	41*)	1.000	137618	1—50	500
124121	1—50	200	130188	31*)	1.000	137636	13*)	1.000
124143	1—50	200	130315	1—50	500	137643	25*)	1.000
124194	1—50	200	130435	1—50	200	137803	43*)	5.000
124218	1—50	200	130472	32*)	1.000	137818	25*)	1.000
124424	32*)	1.000	130512	1—50	500	137924	19*)	1.000
124453	29*)	1.000	130577	33*)	1.000	138030	43*)	1.000
124468	07*)	5.000	130642	09*)	1.000	138174	49*)	1.000
124525	32*)	1.000	130782	1—50	500	138183	1—50	200
124584	22*)	1.000	130991	46*)	5.000	138373	1—50	200
124597	1—50	200	131025	02*)	1.000	138462	03*)	5.000
124606	20*)	1.000	131135	17*)	1.000	138513	44*)	1.000
124759	19*)	1.000	131218	21*)	1.000	138584	1—50	200
124761	1—50	500	131393	14*)	1.000	138628	06*)	1.000
124775	1—50	200	131407	1—50	200	138831	1—50	500
124959	1—50	500	131434	1—50	200	139021	1—50	200
125023	42*)	1.000	131492	1—50	200	139033	1—50	200
125097	1—50	500	131526	01*)	10.000	139251	07*)	1.000
125152	03*)	1.000	131603	23*)	1.000	139348	43*)	5.000
125367	15*)	1.000	131658	1—50	200	139508	19*)	10.000
125499	1—50	200	131720	1—50	200	139657	22*)	1.000
125514	33*)	1.000	131911	1—50	200	139727	19*)	1.000
125588	1—50	200	131971	36*)	1.000	139757	1—50	200
125834	01*)	10.000	132080	16*)	5.000	139778	11*)	1.000
126004	28*)	1.000	132151	27*)	1.000	139871	07*)	1.000
126097	1—50	200	132380	1—50	200			

*) Çак серие кĕрекен облигацисен ытти 49 номерĕ 200-шер тенкĕ выигрыш илĕ.

ЧĂВАШ АССР ПЕРЕКЕТ КАССИСЕМПЕ ГОСУДАРСТВО КРЕДИЧĔН УПРАВЛЕНИЙĔ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—6-67, [illegible] ответлă секретарь—4-28, секретариат—7-32, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăçĕ пайĕ—3-09, [illegible] пайĕ—3-04, культура пайĕ—3-04, [illegible] литература искусство пайĕ—5-61, [illegible] пайĕ—3-54, издательство [illegible]

ИТ 00382 Типографи № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 18. Тираж 37.000 экз.